335 30-84

[illegible]. ИССАЙĔВ

# ÇЕНЕЛНĔ ЙĂХ

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
Мускав ★ 1930

М. ИССАЙЁВ

# ÇĔНЕЛНĔ ЙĂХ

КАЛАВСЕМ

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
Мускав * 1930

Главлит № А 68.395 Заказ 525 Тираж 3000

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР, Москва, Шлюзовая, наб., 10.



Иссайӗв Мӗтри.

# ИССАЙЁВ МĔТРИ

Кĕнекене пиђетленĕ вăхăтра çак кĕнекен автăрĕ — Иссайĕв М. вилсе кайрĕ.

Çамрăкранах реводјутси çулăмне кĕрсе кайса, ĕсхалăхĕшĕн хĕрсе ĕçлесе çунса пĕтрĕ вăл. Комсомол орканисатсийĕсенђе, парттире ĕçленĕ хушăрах вăл вăйлăн аталанса пыракан ђăвашсен илемлĕ литтераттуринђе канма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Унăн „Рапфак хĕрĕ“, „Çулăмри йал“, тата ытти происветенийĕсем реводјутси кăкăрĕпе сывласа, çĕнтерсе пыракан сотсиалисăмлă пурнăçа, çĕнелекен йала, кĕрешĕвĕн çитĕнĕвĕсемпе йăвăрлă-

хёсене кăтартаççĕ. Ђăваш литтературинђе палăркалакан натсионалисăмла, кулакла шухăшсене хирĕç хĕрŭллĕ статйасем, криттĕкла оъђĕрксем çырат̆ вăл çав хушăрах.

Комуниссен партти ретĕнђен, ђăвашсен пролеттариллĕ литтературăшăн, ăна тăвасшăн кĕрешекенсен хушшинђи пĕр хастарвăй паллă писсаттĕл тухса ўкрĕ.

Комунис — писсаттĕл М. Иссайĕвăн пурăнăç çулĕ ђăрмавлă пулнă. Иссайĕв М. 1905 çулта çуралнă. 13 çула çитсен тăлăха йулса Мускаври ађасен çуртĕнђе ўсет. Кайарах туперскуљоспа ђирлесе хĕн курат̆. Анђах кĕрешў çулĕ мухтава тивĕçлĕ. Вăл 1920 çулта комсомол ретне кĕрет, 1925-мĕш çулта парттийе кĕрет. Мускавра Сокколњнĕк районĕнђе çамрăк рапоъђисем хушшинђе хастарлăн ĕçлет.

1924-мĕш çулăн пĕтмĕшĕнђе Ђăваш республĕкне килсен, вăл „Канаш" хаçатра ĕçлет, унтан Шупашкар райкомолĕн çекреттарĕ пулса ĕçлет. 1925-мĕш çулта кĕркунне Мускаври Хĕвелтухăç | халă-

хёсен комунисла университтетне вёренме кайат, анҫах сывлăхĕ наҫар пулнипе унтан кайалла таврăнат. Мускавран таврăнсан „Ҫамрăк хресҫен“ ретактăрĕ пулса ĕҫлет, унтан партти йанипе Хĕрлĕ ҫара кайат. Хĕрлĕ ҫартан таврăнсан Самарта комсомолăн кĕпĕрне комиттетĕнҫе ĕҫлет. Ҫăваш респуплĕкне килсен партин Кĕҫĕнйелҫĕк райкомĕнҫе ĕҫлет, унтан Шупашкара „Сунтал“ шурналта ĕҫлеме куҫат.

1926-мĕш ҫулта Иссайĕв М. туперкуљоспа ҫирлет. Йулашки 4 ҫул хушши, туперкуљос вăйланнă пирки, йалан вилĕмпе кĕрешет, ҫас-ҫасах тăрайми выртат, ҫапах ĕҫлеме пĕрте ҫарăнмаст, ун кăранташĕ айĕнҫен вăл хушăра вăйлăран вăйлă проиcветенисем тухаҫҫĕ. Йулашки 6 уйăх хушши ăна йăлтах ĕҫрен хăтарса пенсҫи ҫине куҫарнăҫҫĕ, анҫах ҫак хушăра та вăл вăхăт-вăхăтпа Самарта „Колхоҫнĕк“ хаҫатра ĕҫлет, вилес умĕн те вăл хаҫата ретаксилесе кăларат, ҫапла унăн кĕске ĕмĕрĕ татăлат.

Комуниссен партти ретĕнҫен пĕр хастар вăй тухса ӳкрĕ. Ҫăваш литтературĕн пĕр паллă писаттĕлĕ вилҫĕ. Анҫах Мĕтри туса ҫитереймен ĕҫе ҫăвашсен пролеттариллĕ писаттĕлĕсен коллективлă хастарлăхĕ туса ҫитерĕ.

*Ретакси.*

# КАЛАВСЕМ

1. ЛИСУК ÇĂПТАÇĂ.
2. СĔРЕКЕ ВАÇКИ.
3. ХУРА ТИНĔС ХУМĔ.
4. ÇУРХИ.

## ЛИСУК ЂӐПТАҪӐ

1

Хватейён ҫемйи йулашки сарӑма тӑваттӑла ҫапса тухрӗ. Авӑн пӗтрӗ, Пӗр кун, йара кунӗпе ҫапмаллӑх та пулмарӗ-ҫке иҫмаса. Мӗнђулах пултӑр ёнтӗ унта тырри!

Ҫулталӑк ҫӳпҫи пысӑк. Ҫимелли кунсем нумай малта. Кунсен шуђӗ искелме те пуҫламан-ха. Ах, ытла та шӑрӑх та вӑрӑм-ҫке кунӗсем. Кӑнтӑрлахи хӗвел анассӑн туйӑнмасТ. Ҫӗр ҫине ҫарруран пуссан, вӗри тупа (ҫатма) ҫине пуснӑ пек. Хӗвелӗ хӗртет. Ҫилӗ вӗрмест. Етеме терт кӳрет ҫанталӑк.

Акма та ђылай кирлӗ, пур анине те хуратса хӑварас пулсан. Хуратса хӑвармаллах пулӗ анасене, ҫитес ҫул та пурнас тесен.

Хватей ҫемйи сарӑм ҫинђен улӑма пуҫтарса илђӗ. Улӑмӗ пӑртак пур та, тырри таҫта. Тӑпаҫпа тем пек хытӑ ҫапсан та тухмасТ, сирпӗнмест. Сирпӗнсе ҫӑвара та пырса кӗмест пӗрђӗ.

— Ыраш пĕрђи çăвара сирпĕнсе кĕрсен, çын пурнаҫ, теђђĕç ваттисем. Кăçал вăл сирпĕнсе кĕнине те асăрхаймрăм. Кĕмерĕ пулас,—терĕ Хватей арăмĕ. Аллинђи кĕреплине пăрахса шăпăр тытрĕ.

Кĕреплене те лекмест тырри, пĕр çулталăк ĕçленĕ тырă. Шăпăрпах, тĕртмесĕрех пуçтарђĕç. Сахал тырă та—çурри мăйан.

Йулашки кĕреçе мăйанпа хутăшлă тыррине ывăтма тăнăђђĕ Хватей, вара ырашĕ те сăвăрса пĕтетђĕ:

— Ах!.. терĕ те хырăмне тытса пуш кĕлтесем çине кайса йăванђĕ.

Ерне те çитет ĕнтĕ Хватей варпа аптăрани. Хватейĕн хырăмра тапхăр-тапхăр çĕçĕпе ђикнĕ пекех ђикнĕ. Тухтăр патне те кайнă Хватей—усси çук.

— Нађар апатран сан ђир. Нимĕн те тума пултараймастпăр. Мăйан çăкăрне çиме йурамаҫ сан,—тенĕ ăна тухтăр.

„Ăна хамăр та пĕлетпĕр-çке те, ыраш çăкăрне ăçтан тупас-ха? Авă, пайан çур кун çапсах авăн пĕтрĕ. Мĕн пурĕ те вунпĕр пăтавкка кăна пулђĕ тырри. Çуртри вуçах çук. Çунсах кайнă. Хирĕ те ĕнтнĕ така пуç тĕслĕ. Пайанхи кун, тырă пулнă çул пулсан, алтан пусса çимелле те-çке. Кăçал автанĕ те çук. Вĕсене те вăхăтсăрах

пусса çисе пĕтертĕмĕр. Ех, ĕлĕкхине мĕн асăнас ĕнтĕ ăна. Ĕлĕк ђух ĕçкĕ ĕçсе алтан тукмакки çисе, итес уйăрса тавлашса пĕтнĕ...“ Çапла шухăшласа выртнă Хватей пуш кĕлтесем çинђе ăшра ыратни лăпланса пынă майĕ.

— Хватей, айта кĕр. Çăмах писнĕ,—тесе сухăрђĕ ăна арăмĕ итем хапхинђен.

Хватей тăрса кукăрлă-макăрлă уткалса кайрĕ. Ун айĕнђи çатрака пек çатăртатакан хăмăллă кĕлтесем хуçăлса йулђĕç.

— Вунпĕр пăтавкка. Мĕн тăвас ĕнтĕ унпала. Акас-и, йе çийес-и!—тенĕ шухăш çиме ларсан та тухма пĕлмен Хватей пуçĕнђен. Вăл шухăш çине тăрсах антратнă Хватейе.

2

Ыраш акма вăхăт çитнĕ. Анђах çынсем темшĕн васкаман. Пĕлĕтелле пăхса тĕлĕрнĕ. Уйа кайса çĕре ђавса хыпаласа пăхса çӳренĕ. Çăмăр кĕтнĕ. Пархатарсăр пĕлĕт çăмăр паман.

Пупĕ кăçал хĕреспе-иккунсемпе темиçе хут та тухнă уйа, темиçе хут та йал тавра çаврăннă. Ђан çаптарсах хăтланнă. Пĕлĕђĕ çапах итлемен. Халăхĕ те итлеми пулса кайнă. Петрав кунĕ пуп пиллĕкĕмĕш хут иккунсемпе тухнă. Уйа кайса йал

тавра çавăрнасшăн пулнă пуп. Халăхĕ пус хапхайне çитиҫҫенех саланса пĕтнĕ. Иккунсем çĕкленисем çеç тăрса йулнă та, пупĕ те кайалла кĕнĕ.

Найанланса кайнă етем. Тума пуçланă ĕçе пĕтермесĕр пăрахнă. Йутшăнма пуçланă. Ёлĕкхи пек, каçпа урам айккинҫи пĕренесем çине тухса ларса сăмах-йумах та вакламан.

Акма вăхăт çинĕ. Никам та акма васкаман. Кăвак çутăпа тухса, кăшт кăна аккаласа, хĕвел тухсан кайалла кĕнĕ. Урапа кӳлмен. Сухапуçне кӳлнĕ те, вăрлăхне лаша çурăмĕ çине михĕпе çакса йанă та, уттарнă уйалла. Акара тискеррĕн туйăннă етеме. Çут-çанталăк, етеме вăрттăн усал тума шут тытнă пек, ытла та ним сасҫӳсĕр, шăп тăнă. Суха тăвакан хыççăн пырасна тăрăх ҫакаксем те вĕçмен ҫалкаса. Сухапуç калекĕ тăрăх кĕлленнĕ тăпра кăна ҫашлатса йухса пынă.

Хватей сынсем акнипе акманнине ирпеле, хĕвелтухăç хĕрелиҫҫенех уйа тухса пăхкаланă. Акакансем пит сайра пулнă. Йăвăр шухăш канăç паман Хватейе. Пуçа çавăрнă, ыйăх паман каççерен...

— Акас!—саспах каларĕ Хватей пуçри шухăша. Çăмăллăнах каларĕ Хватей пуçра йăвăррăн тĕвĕленсе тухнă шухăша.

„Кирек мĕн пултăр, лайăххрах анасене акса хăварсах пулаť. Вăл тырă вĕçне йулсан, нумайах пурнас çук. Тен, хĕрĕм, Лисук, сывă йулĕ. Унăн тепĕр çул выçă лармалла ан пулăр...“ Хватей виçĕмкун ывăлĕ, Йакур, вуласа панă Лисук çыруне аса илђĕ.

„Ђунтан вартан йуратнă аттепе анне тата Иакур. Сире пурсăра та çĕклеймипысăк салам йаратăп. Епир халђ Мускавран вунпилĕк çухрăмра, тем пек пысăк шурă хăмаççип арлакан хапрăкра пурнатпăр. Ку хапрăк пирĕн йалтан та пысăк, Сĕнтĕрвăрри пекех. Пире хапрăкра ĕçлекенсем тăрантса усраççĕ. Аван пурнатпăр, апат лайăх çитereççĕ. Кашни кун какай йашки. Хырăм тутă. Вĕренме пуçларăмăр. Йакур, есĕ ман кĕнекесене потђăпа йар, вĕсем мана халђ питĕ курлĕ“. Çапла çырнă Лисук хăйĕн пирвайхи çырăвĕнђе. Ку çырăва аса илсен, Хватейĕн тĕлĕрекен куçĕсене, виçĕ ерне кайалла, ытти шкул ађисемпе пĕрле, Мускава хĕл касма тухса кайнă сарă çӳçлĕ, çавракa питлĕ вунтăватă çулхи хĕрĕ Лисук курăнса кайнă пекех туйăнђĕ. Хватей хăй ăшĕнђе йуратнă хĕрне вилĕмрен çăлакансене тавтурĕ. Унтан вырăнтан хусканса карăнса илђĕ те, кивĕ сухапуçне майламашкăн сарайнелле утрĕ.

Тепĕр ирхине Хватей йулашки тыррине уйа, кĕлленнĕ тăпра çине кайса сапрĕ.

Лисук килте пулнă пулсан, тен, акмастъĕ те-иăна!.. Икĕ ана акрĕ Хватей. Акнă йулашки виçĕ пăтавкка ытларах ыраш йулъĕ, тата икĕ михĕ мăйан пур Хватейĕн. Пурнас пулаť... Хĕл каçа çĕнĕ тырра тухмалла.

— Тухайрапăр-ши? — шăтарас пекех ыраттараť Хватей пуçне пĕр шухăш — ыйту:

— Тухайрăпăр-ши çĕнĕ тырра? Тўсейрĕпĕр-ши выçлăха?!...

3

Вĕри хĕвел хĕртнĕ уťукпа сăтăрса тухнă пекех ĕнтсе йанă çĕре. Уйри тыră лайăххăн пуç кăларса та ĕлкĕреймен, ăшă тивсе сарăхса кайнă. Çуртырри çĕр çумĕнъен хăпаймасăр, кукша пуçлă çын çўç пĕръийĕсем пекех вĕлтĕртетсе ларнă. Çулсем çинъе ура сыппи таран тусан йавăннă. Хĕвел хĕртсе пăхнă кăнтăрлари вăхăтри сывлăш тусанпа тулнă. Каçхинесенъе пĕтĕм тĕнъене йăвăр, пăъă сывлăш хупласа тăнă. Кас-кас çавраçилĕ виъкĕн çава тытнă выçлăх патшин—есре-

лӗн тискер ташшине ташлать. Хӗрӳ ҫанталӑкри типӗ ҫилӗ, макӑракан ҫӗре хӑратса, улать. Калама ҫук тискер, хӑрушӑ, ӗмӗтсӗр выҫлӑх сывхарса ҫитнӗ.

Ватӑсем, выҫлӑха тӳссе ирттерме шанманнисем, хӑшӗ-пӗри хӑйсене ваљљи хӑйсемех тупӑк туса хатӗрленӗ, масар ҫине кайса шӑтӑк алтса хунӑ.

Пӗр касхине йат тухнӑ ађасем Кашмак Иванӗн хаљ анђах туса хунӑ тупӑкӗ хуппине урама хапха умне тӑратнӑ, тупӑкне урам варрине ҫула урлӑ лартнӑ. Туйраран тунӑ пысӑк хӗресне пӳрт тӑрне хӑпартса лартнӑ. Ваттисен пысӑк хуйхӑ, ҫамрӑк ун ҫинђен питех шухӑшламасӗ патне ҫитсе ҫапӑнмаҫӑр, ҫамрӑка пултӑр кулӑ.

Выҫлӑх, никам ђарайми хӑрушӑ выҫлӑх хӑйӗн ӗҫне тума пуҫланӑ. Ђӑваш хресђенӗсем кам ӑҫта пӗлнӗ унталла туха-туха тарнӑ йалӗсенђен. Ђукун ҫул стантсисем выҫлӑхран таракан халӑхпа пӗвенсе ларнӑ. Ватти-вӗтти пурте хутӑш. Хӑшӗ ытла йусав та какмар тӑхӑннӑ, хӑшӗ ҫӑтӑккипех. Хӑшӗ йулашки пӳртне-ҫуртне сутнӑ укҫипе стантсӑри лавккаран пируспа хӗ велҫавӑрнӑш илсе, малаллахи пурнӑҫ ҫинђен шутламасӑр, пирусне мӑкӑрлан-

тарса, хӗвелҫаврӑннӑшне шӑкӑлтесе ҫӳрессӗ тукун ҫул хӗррипе.

Витӗн ҫава йатнӑ хӑрушӑ есрел—выҫлӑх хӑвалат хура халӑха ӗмӗрхи, асаттесем ҫуралса ӳссе вилнӗ тӑван ҫӗршывран.

Шурӑ сухаллӑ, пӗрӗнтӗк питлӗ ватӑ тӑваш тӑван йӑвана пӑрахса кайасшӑн мар, макӑрат, унӑн пӗрӗнтӗк питӗ тӑрӑх сайра куҫҫӳл тумламӗсем йухса анаҫҫӗ—выҫӑ хырӑм, вилӗмрен хӑрани ирӗксӗрех хӑвалат мӗскӗне килтен—таҫталла, пӗлмен ҫӗрелле, Ҫӗпӗрелле!..

4

Йалӑн пӗр айккинте икӗ ҫил арман халтӑртатса лараҫҫӗ. Пӗрин хӑрах ҫунаттине ҫуркуннехи тӑвӑл хуҫса кайнӑ та, ку тарантен те йусаман. Хӑрах ҫунатпах сулланат вара. Ҫӑва тухнӑранпа армансем ҫунаттисене лайӑххӑн, вӑйлӑн ҫаврӑрса та курайман. Ҫанталӑк шӑрӑх та ҫилсӗр тӑнӑ. Каҫалапа кӑна вара, хӑш тухне, ӑвӑс ҫулҫисене алҫуптаракан ҫил тапрансан,—хӑлтӑ-ӑр-хӑлтӑр-тӑк, хӑлтӑрхӑлтӑр-тӑк, кӑштӑ-ӑр, кӑштӑ-ӑр тукаласа ларнӑ армасем. Пайан та ҫапла хӗвел анаспа ҫил пӳрт умӗнти йӑмра туратти-

сене силлекелеме тапратсанах арман хуçи, армана тухса утрĕ. Пăртак тăрсанах ана-кан хĕвелĕн хĕрлĕ çуттинҫе тем пысăкĕш мĕлкесем туса армансем çунаттисене на-йанăн çавăрма пуçлăрĕç.

Хăлтăр-хăлтăр-тăк! тăвай çил арман йĕки. Кăштăр-кăштă-ă-ăр! çавăрнай арман ҫулĕ.

Хура çĕр çуммипе каçхи тĕттĕм ка-рăнма пуçласан армантан пĕр çын тухса утрĕ. Çурăмĕ хыçне михĕпе тем çакнă-скер, вăл аслă çулпа пăртак кайрĕ те итемсем хыçнелле тӳртен сукмак çине пăрăнҫĕ. Васкасах утай вăл анасем урлă тунă çурран çулпа.

Сисмен хутрах таçтан армансем хыçĕн-ҫен пĕр хура лашаллă çын урапапа вĕç-терсе тухрĕ те тӳрех çав сукмакпа утта-ракан çын çине тытрĕ лашине. Анасем урлă тусан кăларса вăл çынна пĕр саман-трах хуса çитсе тĕшĕрсе ӳкерҫĕ.

— Хурах! Кравул! — çухăрни илтĕн-ҫĕ итемсем хыçĕнҫи сукмак çинҫе.

— Мĕн çухратан, ҫорт!—тесе тепре тытса силлерĕ урапа çинҫен аннă çын сукмакпа михĕ çакса утакан çынна:—Çын анине таптатăн, тата çухăратăн, сысна!

— Каçар, пушалстă, еп туман-çке ку çула...

— А-а, ес туман-и? Есир туман пулсан епӗ хам килсе хам ана тӑрӑх сукмак туса ҫӳретӗп пулӗ-ҫке?!

— Каҫар, Унисӗм Иванҫӑ, тархасшӑн! Ӳлӗм нихҫан урам йарса ан пустӑр. Хаљ те килес ҫукђӗ те ку сукмакпа, килте пӗр ђӗптӗм ҫӑнӑх ҫук, иртерех кӑвас хурса лартас тесе васкаса килтӗм... Каҫар, Унисӗм Иванђӑ!

— Айта ут, йытӑ—тесе Унисӗм Хватейе тӗксе йађӗ.—Тепре курсан урусене ҫапса хуҫап, тепӗр ҫын пулнӑ пулсан, хаљ те ахаљ йарас ҫукђӗ,—терӗ хыҫҫӑн. Хватей сулланса малалалла ђупса кайрӗ те итем карти урлӑ каҫса арпалӑхсем хушшинђе ҫухалђӗ. Хватейӗн килте ҫӑнӑх пӗтнӗ пулнӑ. Вӑл арман хуҫине тархаслаңа аран-аран пӗр пӑт пек авӑртса илнӗ те, Унисӗм ани йӑранӗ тӑрӑх тунӑ сукмакпа килне ытла ҫӗрлене кайиђђен ҫӑкӑр хурса лартасђӗ тесе васканӑ.

Унисӗм Хватейе туласа илнӗ хыҫҫӑн, ӗнерђӗке йусакаларӗ те, урапа ҫине сиксе ларса анасем урлах ђуптарса ҫул ҫине тухрӗ. Унтан пусхапхинђен те пысӑк хура лашине йурттарсах йала кӗрсе кайрӗ.

Унисӗм йал пуйанӗ. Кам йалтан кайат—Унисӗм пурне те ӑсатат.

— Кунта вилтепӗр, ăçталла та пулсан тапранасах пулаť. Тур сывлăх патăрах ӗнтӗ сире,—тенӗ вӗл йалтан выçăпа аптăраса кайакансене. Хăй вăрттăн хӗпӗртесе сухал айӗнђен сарă шӗлӗсене ирнӗ.

Йалтан кайакансем пурте пекех Унисӗм патне тилмӗрме пынă. Çул çине тухакана укçи те, йапали те кирлӗ вӗт. Ăçтан тупас-ха вӗсене? Çуртйӗре сутас, анђах кам илӗ? Йалта нумайӗшӗн çимелли пайан-ыран пӗтес пек. Выçă çын, вилӗме куçран пăхаканскер мӗн тутăр сан çуртупа?! Ирӗксӗрех çӗлӗке хывса пуйан Унисӗм патне...

Пуйан Унисӗмӗн пурнăçӗ ăннă, тути кулнă, шурă куçӗ тăранмасăр татах вилме пуçланă ђухăнсен йулашки пурлăхне хапсăннă.

5

„Пилӗк çула йахăн вăрçăра çăмăр, йур айӗнђе шăнса çӳресе, оккопсенђе пыйтă çитерсе, темиçе хутђен сусăрăнса (аманса) та вилменнине, хаљ килтех вилсӗ выртмалла пулӗ-и?“ тесе шухăшпа тарăхса ларнă Хватей хăйӗн улăм витнӗ çӗрӗк пӳрђӗ умӗнђе:

— Çӗпӗре!.. Мӗнпе кайас-ха унта? Сутмалли те лаша анђах. Пӳрђӗ çӗрӗк

сарайёсем... çапăпа улăм купи çеç. Кĕлет пур ĕнтĕ çавна сутсан... кам илĕ?

— Унисĕм...

Хватей куçĕ умне труках хĕрлĕ сăмсаллă, хайар шурă куçлă хыткан çын пырса тăђĕ. Унисĕмрен курнă нушасем пĕрерĕн-пĕрерĕн ĕрђĕпе Хватей куçĕ умне пулса ирте-ирте кайрĕç. Хватей Унисĕме пĕтĕм ђĕререн курайман. Хватей шухăшпа йăвăрланнă пуçне усса картишнелле утса кĕђĕ.

— Хватей!—тесе ђĕнсе илђĕ ăна алкум вĕçĕнђе хаљ анђах вăрмантан пуçтарса килнĕ икеле алсăн такани çинђе суйласа ларакан арăмĕ.

— Мĕн вара?—терĕ хирĕç Хватей салхуллă сасăпа.

— Мĕн тăватпăр ĕнтĕ? Йакур кайасшăн. Есир йулсан та, пурпĕрех кайатăп, терĕ пасăр вăрмана кайнă ђухне.

Хватей хăй те пайан кунĕпех çавăн çинђен шухăшланă та, анђах вĕçне тухайман. Тăван çĕршыври йуратнă тăван йăвана — çĕтĕкскер, улăм витнĕскер çеç пулин те, пăрахса тухса кайас килмен çав Хватейĕн ватăлмалăх кунра. Çавăнпа вăл арăмне хирĕç нимĕн те калаймарĕ. Арăмĕ куçĕнђен йăвашшăн пăхса илђĕ

те, каллех пуçне усса пĕлтĕр каснă çамрăк туйрасем çине кайса ларҫĕ.

Кивелнипе çăтăлма пуçланă вырăсла хапха сасартăках уçăлса кайрĕ те, пĕр çын йуланутпа пырса кĕҫĕ. Хватейĕн пĕртен-пĕр ывăлĕ Йакур вăрмантан пĕр михĕ икел пуçтарса тавăрăнҫĕ.

— Ну мĕн шухăшлатăн-ха, атте? Епир пайан Кирук Ваçукпе Çĕпĕре каймах шут тытрăмăр. Кайатпăрах ĕнтĕ, — терĕ Йакур. Унтан лаша çинҫен сиксе анса, лаша çурăмĕ çине михĕпе çакса йанă икеле илсе çĕре пăрахрĕ.

— Пĕрле кайсан аванҫҫĕ. Кунтах йулсан пиртен пурпĕрех ҫĕрĕ йуласси пулас çук. Халех икел хышлама пуçлатпăр та, мĕн çисе хĕл kaçăпăр? Хĕл вăрăм вĕт-ха. Хĕлĕн хырăмĕ пысăк тенĕ ваттисем.—Йакур çапла каланă хыççăн, кĕтмен çĕртенех Хватей ура çине сиксе тăҫĕ те:

— Йурĕ, кайăпăр. Арăм, есĕ суклаç-и? —терĕ.

— Епĕ мĕн, епĕ хирĕç мар. Есир ăçта—епĕ те çавăнта,—терĕ хĕпĕртесе Йакур амăшĕ. Вăл Йакур вĕсене пăрахса пĕҫҫенех тухса кайасран шикленсе пурăннă. —„Вилсен те йуратнă ывăлăмпа пĕрле, ун кусĕ умĕнҫе вилесҫĕ!“ тесе шухăшланă вăл вăрттăн макăрса.

— Ну, Йакур, кайар! Мĕн пулса мĕн килĕ ĕнтĕ. Тавай çул çине ваЉЉи укçа тăвас. Ыран лашана пасара илсе тухса сутар. Манăн пайан Унисĕм патне кайса пăхас пулĕ. Кĕлете илет-и, пахЂана илсе йулат-и?..

— Тĕрĕс, атте, вилсен те пĕрле!..—терĕ ашшĕне хирĕç Йакур.

6

Тепĕр ик-виçĕ кунтан Хватей хăйĕн çемйипе кӳршĕсемпе пĕрле пӳртсене питĕрсе, хура çĕр çине вĕри куççӳл йухтарса çывăхри стантсăна тухса кайрĕ.

Стантсăра икĕ талăк ларнă хыççăн пĕр пойăс, пĕтĕмпех кĕлленнĕ тăван çĕре пăрахса Çĕпĕре кайакансемпе тулнăскер, Хватейсене те лартса стантсăран аранаран мĕшĕлтетсе тухса кайрĕ.

Хватей теплушкă-вакун алăкĕнЂен урана усса сӳннĕ пăхăр Ђĕлĕмне çăварĕнЂен кăлармасăр, калла тăрса йулакан тăван çĕршыв çинелле пăхса тĕлĕрсе пынă. Акă, тăван вăрман тăррисем Хватей куçĕнЂен çухлЂĕç. Акă, тăван уйри сăртра мĕн авалтанпа ларакан ватă хурама та (асаттесен турри) курăнми пулЂĕ.

„Кайрӑмах-ши... Пӑрахсах кайрӑм-ши сана, мӗн пӗҫӗкрен сан ҫинҫе сухапуҫпе ҫакаланса ӳснӗ, хура ҫӗрӗм!.. Ҫавӑн пек йӑвӑр шухӑш пусса илнипе Хватей ирӗксӗрех ҫӗтресе кайрӗ. Ҫав самантрах Хватейӗн смала пек хуп-хура ҫӳҫлӗ пуҫӗ ҫинҫе шурӑ ҫӳҫ пӗрҫисем сиксе тухрӗҫ...

Теплушкӑ-вакунсенҫен пулнӑ тем вӑрӑмӗш пойӑс вӗтӗннӗ ҫӗр тӑрӑх хӗрлӗ ӑман пекех авкаланса стантсӑри ҫынсен куҫӗнҫен ҫухалҫӗ.

Стантсӑра татах тем ҫухлӗ халӑх уйӑрма тапратнӑ вӗлле пекех сӗрлесе йулҫӗ.

7

Шурӑ трупаллӑ пысӑк прахут сарлака Атӑл варрипе туран ним сасӑсӑрах вирхӗнтерсе анаҭ. Пристӑнь ҫинҫен пӑхса тӑракансене прахут палупи ҫине тухса ҫанӑ хӗп-хӗрлӗ пуҫлӑ аҫасем курӑнҫӗҫ. Прахут пристӑньрен кӑшт иртсенех пӗр лапка шурӑ пӑс сурса кӑларҫӗ те мӑн сасӑпа ахӑрса йаҫӗ.

— „Власть Советов“... — тесе вуласа илҫӗҫ пристӑнь ҫинҫисем прахут йатне. Прахут сӑмсине майӗпе тӑвалла ҫавӑрса, мӑн кӑмӑллӑ хитре хӗр каҫҫӑ ҫумне пырса ларнӑ пек, пристӑнь ҫумне пырса ларҫӗ.

Прахут çинђен пĕр ушкăн ађа-пăђа, хăшĕ хутаç, хăшĕ пĕђĕк арђа йăтнăскерсем, кĕшĕлтетсе тухрĕç. Кусем выçлăх çул совет влаçĕ Мускава илсе кайнă ђăваш ађисем пулнă. Илме тухнă тăванĕсем, ашшĕ-амăшсем хăйсен ађисене ытараймасăр макăра-макăрах ђуптăваççĕ. Савăнăçпа кăмăл тулни макăртать те çынсене, култарать те. Савăнмасан та савăнмалла çав, кайнă ђухне выçăпа, шăла-пулă пек, типсе хăрса кайнă ађасем хаљ палламалла мар улшăнса, тасалса кайнă. Шап-шурă таса питçăмартисем çинђе хĕрлĕ йун вăй выљанă. Тумтирĕсем те таса та çĕнĕ пулнă. Çăтăк çăпата вырăнне поттинккă, шултра çиплĕ пир кĕпе вырăнне çемçе çитсă.

Илме тухнисем ађисем сывă та лайăх таврăннăшăн хĕпĕртесе хăвăртрах лашисене килнелле çавăрса вĕçтерђĕç.

Лисука илме тухакан пулман. Вăл килес умĕн çыру та йанă та, ответне унђђенхи пекех кĕтсе илеймен. Пристăнђ патĕнђе паллакан çынна тĕл пулмăп-ши тесе пăхкаласа çӳрерĕ Лисук, анђах вĕсен йалĕнђен никам та пулман. Таврăнаканни те Лисук пĕђђенех пулнă та.

Лисук хăйсене ăсатма килнĕ çынсене автурĕ те:

—Сыв пулăр ĕнтĕ, епĕ кайатăп. Ман инçех мар, сакăр çухрăм çеç кунтан, каçҫен çурран та çитетĕп,—тесе уйăрăлҫĕ.

Йала Лисук пăру кĕтĕвĕпе пĕрле пырса кĕҫĕ. Çул çинҫе Лисука пĕр касă çăмăр хупларĕ. Çăмăр хыççăн сывлăш та уçăлса кăкăр тулли сывлаттарнă, хура çĕрĕ те хавассăн пуланса выртнă. Урам айккипе кăтраланса ларакан йăмрасен пиҫĕсене те çăмăр çуса тасатса кайнă. Ҫăх-ҫĕпĕ хĕпĕртесе урама тухса тулнă, çăмăр çапса лартнă тусана сăмсипеле хускататă. Ав, пуйан Унисĕм хурĕсем карталанса йал хĕрринҫи пĕвенелле йарăнтарҫĕç.

Лисук йал варринҫи пĕҫĕк çырма урлă каçрĕ те хăйсен тĕлне çитсе тăҫĕ. Пăхатă: ҫӳреҫесене хăмапа çапса лартнă, пӳрт пуçĕнҫи кĕлтесем те тăлăххăн вĕлтĕртетсе тăраççĕ.

„Вилсе пĕтнĕ-шим?..“ тенĕ шухăш тăнлава ыраттарса вирхĕнсе пырса кĕҫĕ ун пуçне. Лисук пĕр вырăнта хытса кайнă пек пулса пĕр самант пăхса тăҫĕ. Унтан трук вырăнтан тапранҫĕ те карта урлă хăйсен килхушшине вăш-ваш анҫах каçса кайрĕ. Картишне йĕритавра пăхса илсен Лисук хăраса çӳçенсе кайрĕ. Пит тискеррĕн курăнса кайнă ăна тăван кил.

Ывăннипе урисем ыратнине ку таранђен туйманскер, Лисук хаљ ăна питех те лайăх сисрĕ. Канас тесе, аллисене усса алкум вĕçне кайса ларђĕ те шухăша кайрĕ. Анђах Лисукăн шухăш темшĕн çыхăнма пĕлмен пуçра.

Кĕт-кĕт-ĕт-ĕт... ĕт-кĕт-кĕ-ĕ-т! — автан ђăххисене тем çиме йăхăрнă сасă Лисука ирĕксĕрех пуçне çĕклеттерсе пăхтарђĕ. Килкарти варринђе ула автанпа виçĕ ђăхă унăн паçăр пăрахнă хутаççи патĕнђе таккаса тăнă.

„Кам ђăххисем-ши вара кусем?“ тенĕ шухăшпа Лисук хăйĕн хутаççинђи çăкăр тĕпренђĕкĕсене кăларса:

— Ђип! ђип! ђи-и-ип!—тесе ђăхсене сапса парать.

— Ес мĕн тăватăн кунта, е-е?—хайар сасă Лисук хăлхи айĕнђех йанăраса кайрĕ. Лисук шартах сиксе ура çине тăђĕ те, хăй умĕнђе сиввĕн пăхса тăракан мăнтăр арăма курах кайрĕ. Вăл ашшĕсем çинђен ăçта, кам патне кайса ыйтса пĕлес шухăшпа, хăй патне Униçĕмĕн мăнтăркка арăмĕ Хриçтук пырса тăнине пĕртте сисмен.

— Мĕн кирлĕ сана кунта? Кам хĕрĕ есĕ?—тесе ыйтрĕ тепре Хриçтук сурђăкне сирпĕтсе.

— Мĕн тума?.. Пирĕн кил вĕт ху. Аттесем ăçта-ши?—терĕ Лисук пăтранса, хурланнипе макăрса йарасран хăйне хăй аран аран ҫарса тăҫĕ. Унăн кăкăртан тем тулса килҫĕ те пыр шăтăкĕнҫе çăмах пекскеd капланса ларнă пекех пулҫĕ.

— Лисук пултăн-и-ха? Паллаймарăмçке.

— Çавă

Пуйан Униçĕмĕн çемйи Лисуксен пахҫинҫе паранкă кăларнă иккен. Хриçтук килхушшине Лисук ҫăхсене йăхăрнă сасса илтсе кĕнĕ. Униçĕм Хватейрен çуртйĕрпе пĕрле пaçмине те тара илсе йулнă. Хватей пахҫинҫе паранкă вырăнĕсĕр пуçне тата çирĕм-вăтăр тĕп улмаççи те пулнă.

Хриçтук Лисук ашшĕсем Çĕпĕре кайни икĕ çул çитнине, çуртйĕрпе пахҫана хăйсем илсе йулнине каласа паҫĕ. Унтан хăйсем патне çывăрма ҫĕнҫĕ. Йалта тăвансенҫен никам та йулман пирки, Лисукăн çывăрма ирĕксĕрех Униçĕм патне каймалла пулҫĕ. Килне çитсен мăнтăркка Хриçтук хăй пек мар хыткан упăшкине Лисук çинҫен пĕлтерҫĕ.

— Хамăр патăртах пурăнтарас. Ашшĕсем те ҫĕрĕ, те вилĕ. Кайнăранпа та ним сас-хура та çук вĕсем çинҫен. Вăл пирĕн

патăрта пурăнсан луҫҫă; ҫĕрне те пĕтĕмпех акса усă куратпăр, пахҫи те хамăрăн пулатĕ, хăй те пирĕн ĕҫе ĕҫлет. Пире ĕҫлекен кирлĕ, — терĕ Униҫĕм арăмне. Унтан айккинелле пăхса илҫĕ те:

— Ҫынҫене, хĕрхенсе, усрама илтĕмĕр тесе калас,—терĕ куҫне хĕссе. Униҫĕм ҫейе. Вăл мĕнле тусан мĕн пулассине пит лайăх пĕлет. Унăн ăс ҫитет. „Пăтранҫăк шывра пулă тытма“ вĕреннех вара Униҫĕм...

8

Хĕле кĕрсен Униҫĕм Лисука та ҫăпта ҫаптара пуҫларĕ. Малтан Лисук курăс ҫĕркелерĕ, ҫапма вĕренсен вара ҫăн ҫăптаҫах пулса кайрĕ. Лисуксем Униҫĕмĕн кивĕ пӳртĕнҫе ĕҫленĕ. Пӳрте, пĕҫĕккĕ пулин те, икĕ станок вырнаҫтарнă. Пĕринпе Лисук, тепринпе Вăрăм Павăл ĕҫленĕ. Вĕсене пулăшаканнисем тата тăваттăн пулнă: икĕ хĕр курăс ҫĕрсе ленттăсемпе вĕттисене хатĕрленĕ, икĕ арҫын аҫа вунă-вуникĕ ҫултан иртменскерсем йĕп кăларса тăнă. Кашни ир 3—4 сехетре пуҫласа каҫпа хăй ҫутмалла пулсан тин ĕҫлеме ҫаράннă. Ахаҫ те тăвăр пӳртре муҫала тусанĕпе вăхăҫĕпе сывламалла мар пулса ларнă. Ҫăптаҫсем ҫапах

ĕçленĕ: курăсне ҫĕрнĕ, йĕпне, кăларнă, хĕçне туртнă. Хĕрсем, хушăран Вăрăм Павăл та ватă пуçпех, йурă ĕнĕрленĕ. Анҫах йурă пĕрре те хавассăн шăранса тухман, ҫĕлхе вĕçне те хавас кĕвĕ темĕншĕн килесшĕн пулман. Йăвăр, киҫем ĕç хурлăхлă йурă кăна кăларнă ҫĕререн.

Лисука станок кутĕнҫе ҫас та ҫас ашшĕ-амăшсем аса килнĕ. Лисук вăхăҫĕпе вĕсем киле тавăрнасса та шаннă. Пуринҫен ытла ăна кӳршĕ йалсем, выçлăх çул Çĕпĕре кайнăскерсем кĕркунне тавăрăнса, кайнă ҫухне пуйансене йӳнĕ хакпа сутса хăварнă çурҫĕсене кайалла сут урлă илсе, хăйсен килĕсенҫех пурăнма пуçлани ашшĕсем çинҫен шухăшлаттарма пуçланă. „Аттесем тавăрăнсан епир те Унисçĕмрен сут урлă хамăр çуртйĕре, пахҫана кайалла илсе хамăр килтех пурнăттăмăр“, тесе шухашланă Лисук.

Анҫах пĕр сивĕ ир Лисук ĕмĕҫĕ сасартăк татăлнă. Лисук ашшĕсемпе пĕрле кайнă кӳршĕ çыннисем икĕ çемйе Çĕпĕртен тавăрăннă. Икĕ çемйе тесен, тĕрĕсех пулмасть ĕнтĕ вăл, икĕ çемйе йулашки тесен тĕрĕсрех пулĕ. Мĕншĕн тесен пĕр çемйерен тăваттăн кайса пĕҫҫенех тавă-

рăннă: пĕр муђин арăмĕ тата икĕ ађи Çĕпĕрте вилнĕ те хăй пĕђђенех килнĕ вара. Телĕр çемйин пуçлăхĕ вилсе йулнă, арăмĕ тлватă ађипе кайалла тăван çĕр-шыва килнĕ. Вĕсенђен Лисук хăйĕн ашшĕ-пе амăшĕ Çĕпĕрте тифпа ђирлесе вилсе выртнине пĕлђĕ. Йакур, Лисук пиђђĕшĕ, ашшĕпе амăшне пытарсан пĕр çула йахăн савăтра ĕçленĕ. Унтан вара тасҫта çухал-нă, ăна кўршĕсем (пускилсем) калама пултарайман.

Çапла Лисукăн йулашки шанђăкĕ са-сартăках килсе татăлнă. Вăл хыпара илтнĕ хыççăн Лисук ђылайђђен куљљан-са çўренĕ.

„Мĕн тавас? Пурнас-и йе вилес-и?!" тесе те шутланă Лисук пĕрре, пĕве çинђе вак кутĕнђе кĕпесем ђўкенĕ ђухне. Анђах ăшран темле вăй:

— „Вилес мар-ха, пурнас. Ђăпта çап-са асаплансан та, малаллах пăхас!" тесе калаттаракан вăй Лисукăн киђем шухăш-не çĕнтерсе çийеле тухса пынă.

Пĕрле ĕçлекен Вăрăм Павăл та йăпат-нă Лисука. Кирлĕ вăхăтра Уницĕм умĕн-ђе Лисук хутне кĕрсе калаçнă. Ђăпта ĕçĕн иртме пĕăмен вăрăм кунĕнђе, хăй ашшĕ-амăшĕнђен çиђĕ çулта йулса, мĕн пĕђĕкрен çын çинђе çўресе тем тĕрлĕ.

нушта курса та вилменни çинђен каланă вара Лисука Вăрăм Павăл.

Лисукăн майĕпе кăмăлĕ çаварăннă. Малта татах çĕнĕ шанђăк пур пек туйăннă вара ăна.

9

Вуламалли çурт пуçлăхĕ Йермолайĕв вăрманта тӳрĕ те вăрăм ăвăс шалђа шыраса çӳресе сисмен те тăман тухса кайнине. Тăман вăйланнăçемĕн вăйланса пынă. Каç та пулса килнĕ. Йермолайĕв ратио ваљљи мађтă тумалли шалђа касса вăрмантан тухиђђен тĕттĕмлене те пуçланă. Йала пĕр виç çухрăм пулаť: инçе килнĕ Йермолайĕв. Вăл килнĕ ђухне çил те, тăман та пулман та, йĕлтĕрпе çăмăл пулнă шутарма.

Шалђана пиçĕккипе çыхса çакса йанă та Йермолайĕв, çине тăрсах тăмана хирĕç йалалла ӳпĕнет. Пуçа ђиксе мекĕрленсе пыраť Йермолайĕв, хăй — хăвăртрах çул çине тухасђĕ, тесе шухăшлаť.

Тепле, ăнсăртранах ăна çил уланă хушăран çын сасси илтĕнсе кайрĕ. Такам çухăрнă пек туйăннă мал йенђе.

— О-о-ой! Пулăшăр-ха-а!..—тенĕ сас илсе килђĕ çил. Йермолайĕв уттине вас-

катрĕ. Малта çуна çулĕ, унтан çырма. Çырмине „Çунакаççи“ теççĕ. Çунакаççи çырми варринче пĕр хура тĕмеске курăнать.

Йермолайĕв хăвăртрах çырмана анса кайрĕ. Пăхать лайăхрах: çырма варĕнче Лисук мунчала тийенĕ лавпа путса ларнă. Лашине тăварса пăрахнă, çапах кăлараймасть. Пит тарăн йур çырма варĕнче, Лисук лашана кăларма хăтланса темиçе хут пута-пута ларса вăйран кайнă. Çитменнине тата аллисем шăнса кӳпчесе кайнă та, тыткалайми пулнă.

Йермолайĕв пĕтĕм вăйхалран тăрăшса Лисук лашине кăларса пачĕ. Çунине çул çине турта тухма вăй çитереймерĕç. Вара Йермолайĕв Лисука лаша çине утлантарчĕ те, мунчала çунине пăрахсах йала килчĕç. Йермолайĕв Лисука хăй патне илсе кĕрсе кӳпчесе хытса кайнă аллисене çпиртпа сăтăрса йачĕ. Лисукран ăçтан килнине, мĕнле путса ларнипе ыйтса пĕлчĕ.

— Шупашкара кайнăччĕ. Униçĕм мана мунчала тийеттерчĕ те киле килме каларĕ. Хăй тепĕр лашапа унтах йулчĕ. Çул çинче тăман тухса кайрĕ. Шăннипе тĕршĕнсе выртса пыраттăм. Чиперех пăхса пыраттăм. Ик каç куç хупса курман-

скер, çывăрса кайнă епĕ. Çунакаççи çырмине çитсен ман лаша çултан пăрăнса çырма варне кĕрсе кайнă вара. Ес тĕл пулман пулсан, çавăнтах шăнса вилеттĕм пулĕ... Ес пыриђђен епĕ хам ăçтине те тавçарса илеймен вĕт. Ахађ каламаççĕ çав вилĕм куçа курăнса килмест тесе... — терĕ Лисук Йермолайĕва.

Пăртак ăшăнсан Лисук Йермолайĕва тав турĕ те, лашине çавăтса Унисĕм килне кайрĕ.

Кайас умĕн Йермолайĕв Лисука вуламалли çурта кĕрсе тухкалама каларĕ.

— Пирĕн вуламалли çуртра ратио пулаť акă. Мускавран контсертсем, токлатсем итлетпĕр. Хĕрсемпе итлеме пырăр.

Вăхăт пулсан пыратпăр пулĕ,—терĕ Лисук.

10

Çавал йалĕн вуламалли çуртĕнђе кашни каç ратио кĕрлеме пуçланă...

Анттеннăн пĕр вĕçне ђиркӳ тăрĕнђен кăкарса йанă. Тепĕр вĕçне вуламалли çурт пуçлăхĕ Йермолайĕв касса килнĕ ăвăс шалђана пӳрт тăррине тĕреклетсе лартса унтан кăкарнă. Сывлăша пралук

карни йала хаљђђен курман йапала пырса кёни çинђен пёлтерсе тăнă.

Кашни каç ратио тăрăх токлат, йурăсем, мусăк шăранаť. Кёрлет прийомнёк — тёлёнет йал, хаљђђен курман çёнё йапаларан. Анђах ватăсенђен итлеме пыракансем çукпа пёрех.

Пуппала ђиркў старăстинђе тăракан нисём ратио пралукне ђиркў тăрёнђен кăкарнăшăн тарăхса, йал тăрăх сăмах арс çўренё.

— Комсомолсем ђиркўве хупма хатёрленеççё. Хаљ ђиркў тăрёнђен асаймăçла пралукне кăкарђёç, тепёртак тăрсан ђиркўне те кёрсе вырнаçёç акă,— тесе калаçнă Унисёмпе пуп халăх хушшинђе. Вёсем хыççăн вара йалти шăлсăр карђăксем мăкăртатма тапратнă.

Пёр каçхине хайхи такăшё ђиркў тăрринђен кăкарнине касса йанă та анттеннă çёре персе аннă.

Кунашкал ёç пулнă хыççăн комсомолёссемпе вуламалли çурт пуçлăхё (вăлах йађейккă çекреттарё) йалсоветне кайса каланă. Йалсоветне каласах анттеннăна тепёр хут çав ђиркў тăрёнђенех кăкарса йанă.

Унисёмпе пуп пăтратма çаплах ђарăнман. Вёсем:

— Комсомолсен пралукĕ хăй тĕллĕнех татăлса аннă, вăл ĕнтĕ унашкал асаймăçла йапаласене турă çуртĕнђен кăкарма йурманнине кăтартат̆. Комсомолсем турра хирĕç пыраççĕ, турăран кулаççĕ, — тесе çӳренĕ йалта.

Парлука татса йанă хыççăн вуламалли çурта ратио итлеме пыракансем татах сахалланнă.

— Мĕн тăвас? — тесе шухăшлат̆ Йермолаĕв комсомолĕссене пухса. — Вуламалли çурта ваттисем вуçах килми пулђĕç. Йал хушшинђе пăтранђăк сăмахсем çӳреççĕ пирĕн çинђен. Мĕнле май пур ши?..

— Итлĕр-ха, ађасем, йалсоветђĕ ыран-и, тепĕр кунне-и пуху пухат̆. Ман шутпа çав пухăва вуламалли çуртра тума ыйтас йал советĕнђен. Кунта вара халăха ратио çинђен каласа ăнлантарас тата ратио итлеттерес... Ун хыççăн вара мĕн пулĕ, пăхăпăр, — терĕ пĕр комсомолĕс, комсомол йађейккин йалсоветĕнђи претставиттĕлĕ.

Тĕрĕс, тавай çапла тăвар-ха! — тесе йатса илђеç ыттисем претставиттĕл шухăшне. Вара çак шухăш çинђе ђарăнђĕç, ăна ĕçе кӳртме тытăнђĕç комсомолĕссем,

Йалссвет претçетаттĕлĕ ђасах килĕшрĕ. Уншăн пулсан пухха кирек ăçта пухсан та пурпĕрех.

Тепĕр икĕ кунштан вуламалли çуртра халăх пухăнаť. Комсомолĕссем малтанах пырса ларнă. Маларах пыракансене хаçатсем вуласа параççĕ, ратио çинђен сăмах çавăрса ăнлантарса параççĕ. Вулама пĕлекенсем ваљљи йури кăмака çумне пысăк сарлака фанерă хăми çине шултра саспаллисемпе тĕнђери çĕнĕ хыпарсене çырса çапнă. Çавăнтах ратио тăрăх илнĕ йулашки хыпарсем çакăнса тăраççĕ. Пысăк саспалли айакранах ђĕнет çынсене. Кĕрекенни пĕри ăна вуламасăр иртмест.

**Франтсире 12 комуниса вăрçа хирĕç ĕçленĕшĕн тĕрмене хупмалла тунă.**

**Франтси правиттĕлстви Марокка çĕрĕнђе вăрçма ђаранасшăн мар.**

**Пирĕн Совет ваљљи Амерĕкрен 1600 трактăр килет.**

Йепле иртес-ха çакăн пек куçа тĕртсе çухăрса тăракан пысăк саспаллисемпе çырнă хыпарсенђеп?! Иртсе кайма хал çук Вуламасăр ђăтма çук.

Халăх пухăнҫĕ. Хăйĕн ĕçĕсене сўтсе-йаврĕ. Йулашкинҫен Йермолайĕв ратио çинҫен калама сăмах илҫĕ.

— Йулташсем,— терĕ вăл,— пирĕн йала Шупашкарти ĕçлекенсем шеф йĕркипе ратио-прийомнĕк илсе паҫĕç. Ана илме укçа тумашкăн вĕсем пĕр шăматкун ĕçе ик сехтре пĕтерес вырăнне тăват сехетре тин пĕтерҫĕç. Вара çав икĕ сехет ытлашши ĕçленĕ укçапа тата профсойус хăйĕнҫен уйăрнă укçапа пире çак прийомнĕке илсе паҫĕç. Ĕçлекенсене епиприйăн тав. тума тивĕçлĕ. Ратио урлă епир тенҫери хыпарсемпе паллашма пултаратппр Ав, кăмака çумĕнҫи хыпарсене пурте вуларăр пулĕ. Вĕсене пайан ирхине ратио тăрăх илнĕ. Ратио тăрăхах йурăсем те, мусăк та итлеме пулаť, тĕрлĕрен усăллă, хресҫене кирлĕ ĕçсем çинҫен те вĕренме вулаť...

— Мĕншĕн ҫиркў тăрĕнҫен кăкартăр! —терĕ пĕри хыçалтан.

— Мĕншĕн унтанмкăкартăмăр? Мăншĕн тесен пирĕн вулаалли çурт çывăхĕнҫе урăх çўллĕ йа ала çук çавăнпа ҫиркўрен кăкармаллапулҫĕ. Епир анттеннă кăкарнипе ҫиркўве нимĕнле сийен те пулас çук. Униçĕмсем: „комсомолсем ҫиркўве хумпа хатĕрленеççĕ“, тени те суйа сăмах. Туртса илес пулсан, вĕсене пĕр

чунтах туртса илсе, хупса пётерме пултараççĕ. Анђах апла тунипе тĕне пĕтерес çук. Пирĕн партти тĕнпе ун сийенлĕхнĕ, суйалăхне ăнлантараса парса кĕрешет. Ђăнах та, пурăнсан-пурăнсан, ђиркӳвĕ ватăсемсĕр пуçне никам та çӳреми пулсан, тен халăх хăйех ђиркӳве хупса пире клуп тума парĕ. Анђах епир ђиркӳве туртса илесси çинђен калани суйа сăмах, терĕ Йермолайĕв.— Хаљ ĕнтĕ кам итлес текенни ратио итлеме пултарăт. Мускавран контсерт параççĕ пайан.

Ратио хытă саспа ахăрса йађĕ.

— Трапхин хăта, килсе итлесем ара, сан пекех пысăк саслăскер калаçăт,—тет лĕр муђи.

Çынсем сухалсене каçăртса прийомнĕк тавра тађăрах пуçтарăнса ларђĕç. Тĕрлĕрен йурă-кĕвĕсем шăранма пуçларĕç.

— Мускавранах-ши ку?!—тесе тĕлĕнет пĕри.

Украйнăлла йурă йуралса пађĕç.

— Ах, хитре çав хохxолсен йурри, салтакра ђухне нумай итленĕ еп вĕсене, —терĕ тепри.

— Пилĕк минутлăх перерыв... — терĕ руппăр.

Çак кун ратио ђылай пысăк ĕç турĕ. Кун хыççăн вуламалли çурта ваттисем те

ђас та ђас пыма пуçланă. Тата хăйсен ађисене те вуламалли çурта çӳреме ђарсах кайман.

Çапла йађейккă хăйĕн ĕçĕнђе пысăк утăм турĕ.

11

Хĕллехи хĕвел аран-аран йăраланса тухса, тин анђах çил арман çунаттисем хушшинђен пăхса илнĕђђĕ. Петĕр хăйпе кпĕрле тепĕр типокрафинђе ĕçлекен комсомолĕса лартса комунпай лашипе Çавал йалĕн пусхапхинђен вĕçтерсе пырса кĕђĕ.

Йалăн улăм витнĕ пĕђĕк пӳрђĕсем çуркунне пĕр-ик çухрăмах сарăлса кайакан Çавал шывĕ хĕррипе сапаланса выртнă. Çавăнпа йалĕ те шыв йатне йышăннă пулмалла. Йал варринђе, тӳрем çĕртех тĕме пек çӳлĕ вырăнта, Ђар Иван ђухнех интунă ђиркӳ курпунланса ларнă. Унтан инçех те мар, хĕрлĕ листук витнĕ шатрун пӳрт, ытти пӳртсенђен уйрăмрах тăни, айакранах хресђен çурђĕ маррине пĕлтерсе тăнă. Ĕлĕк ђух вăл пуп çурђĕ пулнă.

Петĕр хăйĕн вунтăхăр çухрăм килсех кăпăка ӳкнĕ лашине çав пӳрт умнелле

çавăрсан, ун йулташĕ Иван урамалла тухакан алкум тăрне çапнă вывĕскăна:

**ÇАВАЛ ЙАЛСОВЕЂĔ**
ВУЛАМАЛЛИ ÇУРТ

тесе çырнине саспах вуласа илђĕ. Иван йала шеф ĕçĕпе пирвайхи хут килнĕ майĕпе, ĕçе мĕнле тытăнассинђен кăшт шикленнĕ. Вăл Петĕре хулĕнђен тăк тĕртрĕ те:

— Ман мĕн тăвас-ха ĕнтĕ кунта пайан?—тесе ыйтрĕ.

— Кунта епир кăçал кĕркунне комсомол йађейкки уçнă. Комсомолĕссем йышлах мар халĕ. Есĕ пайан комсомолĕссене çтена хаçађĕ кăларма пулăшатăн. Вĕсене çтена хаçатне илемлĕрех те, пурнăçлăрах кăларма вĕрентес пулаť. Йал пурнăçĕ çине ытларах уртăнас. Çтена хаçатне сурхурине кăларасшăн вĕсем... Епир Йермолайĕвпа сурхуриђђен хоркрушок уçасшĕн-ха. Кĕçĕр уллаха тухса çўрес-ха,—терĕ Петĕр çуна çинђен анса. Лашине шитти (карта) йупинђен кăкарса йађĕç те, вара иккĕш те тăлăпĕсем çумне çыпăçнă йура шаккакаласа вуламалли çурта кĕрсе кайрĕç.

Вĕçем кĕнĕ ҫухне вуламалли çурт пуç-лăхĕ, Йермолайĕв йулташ, иртнĕ çуркун-не анҫах Шупашкрати парттипе канаш шкулĕнҫен вĕренсе тухнă çамрăк çын, сурхурине хирĕç калакан плаккатсем, лосунксем çыпăçтарнă. Петĕр кĕрсенех йĕри-тавра пăхса илҫĕ. Пӳртĕн пĕр кĕ-тессинҫе турра хирĕç çырнă кĕнеке-шур-налсен выстăвкки пулнă. Çтенасем çумĕн-ҫе тĕрлĕрен плаккатсем хĕрлĕн те кăвакăн йалтăртатнă. Пĕр кĕтесре ратио-прийом-нĕк йури тунă арҫара питĕрĕнсе тăнă (ĕç-лемен вăхăтра). Вуламалли çурта кăмăла каймалла илемлетни,лосунксемпе плаккат сене лайăх суйласа çакма пĕлни, кĕнеке-хаçатсем тирпейлĕ тăни—пурте ун пуçлă-хĕ хăйĕн ĕçне пĕлсе тата йуратса ĕçле-нине кăтартса тăнă. Петĕр те хăй ă'пĕнҫе Йермолайĕва мухтаса илҫĕ.

— Сывă-и-ха, Йермолайҫă! — терĕ Пе-тĕр сĕтел çине тăрса плаккат çапакан вуламалли çурт пуçлăхне.

Йермолайĕв пуçне алăк патнелле çавăрҫĕ те:

— О-о! Хăнасем килҫĕç иккен. Сывă-ха, аван!—терĕ Петĕре хирĕç. Унтан сĕ-тел çинҫен сиксе анҫĕ те хуларан килни-сене ларма пукансем парса калаçма тытăнҫĕ.

— Пӗркун пӗрле канашланӑ тӑрӑх епир уҫитлӗпе,— пӗлен вӗт пирӗн Шикайӗвӑна,— уллахсене тухса çӳреремӗр. Пӗр уллахри хӗрсем хоркрушока çӳрес пек калаçрӗç-ха. Вӗсенҫен пӗри, Лисук йатлӑскер, пит пултармалла хӗр пек курӑнҫӗ мана. Вӑл ҫи малтан крушока çӳреме кӑмӑл турӗ. Ыттисем татсах каламарӗç, иккӗленеççӗ-ха. Çав Лисук пирӗн йенне куçсан, ыттисем вӑл уллахара ун хыççӑн кайаççех вара! Епӗ ӑна пӗркунне ратио-маҫтӑ ваҙҙи шалҫа касма кайсан, Çунакаççи çырминҫе шӑнса вилесрен хӑтартӑм. Çавӑнтанпа курсан сӑмах хушмасӑр нихçан та иртмест вӑл. Çавӑнпа ун çинҫе шанҫӑк пур пек-ха,—терӗ Йермолайӗв.

— Каçхине кайасҫӗ-çке унта апла пулсан,— терӗ Петӗр.

— Кайӑпӑр.

— Шикайӗвӑна та систерес. Хӗр хӗре хӑвӑртрах ӗнентерӗ. Сирӗн уҫитлӗ аван комсомолккӑ пулас-ха вӑл,— терӗ Пӗтӗр йурийех Йермолайӗв çинелле хытӑрах пӑхса.

— Вӑл пултараӗ-çке. Хӗрӗ аван,— терӗ Йермолайӗв темшӗн кӑшт именнӗ пек пулса.

Kaçхине Петĕр, Йермолайĕв тата йалти хĕр-уђитлĕ Шикайĕвă—виççĕн пĕрле уллаха кайрĕç.

Пайан уллах, Лисук йулташĕн, Верукăн амăшĕ Шупашкара петтехниккумра вĕренекен ађи патне çăкăр леçме çĕр выртмаллах кайнă майĕпе, Веруксен пÿртĕнђе ларнă. (Веруксен ашшĕ пулманвăл выçлăх çул Çĕпĕрте вилнĕ).

Петĕрсем Веруксен хапхинђен анђах кĕнĕђђĕ, пÿртре ламппă çути лап! сÿнсе ларђĕ те, шăри-шари çухăрса тĕпĕртетме тапратрĕç.

Йермолайĕв Петĕре:—Айта хăвăртрах,—терĕ те алкумне ђупса улăхса алăка тĕртрĕ. Алăкне шалтан çаклатнă, кантрине шалалла туртса илнĕ.

— Хăлăпĕнђен тытса çĕкле, çиђђас уçăлать,—терĕ хĕр-уђитлĕ.

Йермолайĕв алăка хăлăпĕнђен туртарах çĕклерĕ те, алкум алăкĕ ђасах уçăлса кайрĕ. Виççĕш те пÿрте кĕрсе кайрĕç.

Кĕрсенех Йермолайĕв спиђкă çутса йаđĕ те урайĕнђи улăм тăрăх ламппă патнелле утрĕ. Петĕр вăл вăхăтра уллах пÿртне йĕри-тавра пăхса илђĕ. Урайĕнђе улăм çинђе икĕ мăшăр выртнă. Пĕр мă-

шăрĕ шăпах тем çинђен калаçса выртнă, тепĕр мăшăрĕ тем кĕрмешнĕ: хĕрĕ арçын ађинђен çăлăнса тарасшăн пулас. Тĕпелте сарлака сак патĕнђе пĕр пасар пиншакĕ тăхăннă ађа Лисукпа çапкалашса тăнă. Лисукĕн çӳç-пуçĕ саланса кайнă. Ађи Лисука вырттарасшăн пулнă мĕн те, Лисукĕ выртман та, парăнман та. Тата икĕ хĕр малти кĕтесе хĕсĕнсе хăйсен умне кăнђала уççисене тытса ларнă. Кайри сак çинђе виççĕн-тăваттăн çамрăкрах ађасем çăпатисемпех сак çине хăпарса выртнă та, тапакне мăкăрлантарса ђунтанах ахăлтатса кулнă.

— Мĕн, сысна çурламан пулĕ вĕт пӳрте улăм кӳртсе тултарнă, йе тăхăр сехетрех çывăрма выртрăр-и?—терĕ Йермолайĕв йĕкĕлтесе лампă çутса йарсан.

— Хĕрсене çурлаттарасшăн-ха... —терĕç кайри сак çинђе выртакансем.

— Ав, лаканай, вăтăр çула çитнĕ пуљ хăй, çапаш хĕр çывăрттарасшăн çӳрет! —терĕ Верук пĕр сăкман тăхăннă, хура уссиллĕ пĕђĕк çын çине тĕллесе.

Пӳртре сасартăк çупкă сасси йанăраса кайрĕ.

— Çав кирлĕ сана такçанах! — терĕ Лисук пасар пиншак тăхăннă ађа аллинђен çăлăнса.

— Каскăн ... терĕ те каҫҫи ним тума аптăраса пăрăнҫĕ.

— Ай-йай, лайăх ҫупкăҫларĕ!

— Анне, кукли, анне кукли ҫитерҫĕ Лисук Ивана! — тесе йĕкĕлтеҫҫĕ, каҫса. кайсах кулаҫҫĕ кайри ҫак ҫинҫисем.

— Есир мĕн... ваҭ твойу таканисем... — терĕ Иван вĕсем ҫинелле сиввĕн пăхса.

— Анне клкли... ҫупкăҫ... — терĕҫ ăна хирĕҫ. Кулă ҫаранмарĕ.

— Пирĕн пеккисемпе вы̆ртаҫҫĕ-и вĕсем, вĕсене хуларан килнисем кирлĕ вĕт... Айта, Макҫăм, кайатпăр, — терĕ пасар пиншак тăхăнни лутра ҫынна.

— Тот-тă, сирĕн пек кукшасемпе ҫыхланмастăр ҫав, — терĕ ăна хирĕҫ Лисук. Лешсем алăка шалт! хупса тухса кайрĕҫ. Вĕсем тухса кайсанах кайри сак ҫинҫе ларакан аҫасем урай варне сăкман сарҫĕҫ те картла выҕама ларҫĕҫ. Хĕрсем вырăнсене ларса хăйсенĕ ҫне тума пуҫларĕҫ

Ҫав хушăрах комсомолĕс Хвеҭук купăс ăсти, икĕ ретлĕ купăсне ҫăсса пырса кĕҫĕ. Уҫитлĕ пуҫарнипе хĕрсем, йурă савăрса йаҫĕҫ:

Атте пахҫи, улма пахҫи,
Улма ҫисе ӳсрĕмĕр,
Ай, ӳсрĕмĕр,
Ҫампа хĕрлĕ пултăмăр...

Атăл çинђи хум пекех хумханса йухрĕ йурă. Хĕрсен ĕçĕ те йурă çеммипе ĕнерĕнђĕ. Хĕрсен аллинђи тулнă йĕкесем урайне анса йурă кĕввипе ташларĕç.

13

Улаха тухни, ђăнах та, пит ăнăçлă пулђĕ. Çамрăк хĕр-уђитлĕн ђĕрене савакан çемçе ђĕлхи те нумай пулăшрĕ пулĕ ку çĕр. Комсомолĕс Хвеţук купăсĕ те хăй вырăнне йышăнђĕ пулĕ ку ĕçре. Шикайĕва малтан Лисукпа калаçса татăлђĕ. Ытти хĕрсемпе вара Лисукпа иккĕшĕ калаçрĕç. Кайран хĕрсем уçăлса кайрĕç те, хавхалансах сăмах-йумах йухтарђĕç. Тĕрлĕ йапаласем çинђен ыйтса пĕлме те имеңмерĕç.

Йермолайĕвпа Петĕр уллах саланиђђенех çумĕнђен кайма пĕлмерĕç. Лисук вĕсене Мускаври пурнăç çинђен каласа пађĕ, унта ађа çуртĕнђе пурăннă ђух пионерта тăнине те каларĕ.

— Пионерсен отретне епир хамăр йалта уçсан, есĕ унта ĕçлеме кăмăл тăвăн-и?—тет Йермолайĕв Лисука сăмах çинђе ђарса.

— Вăхăђĕ тупăнсан ма ĕçлемелле мар, анђах пионерсен йĕркине маннă епĕ,—терĕ Лисук.

Сӑмах... Тӗлӗнмелле йапала вӑл сӑмах! Мӗн тумасӗ-ши сӑмах тӗнђере? Култарать те сӑмах, хуйхӑртать те сӑмах, пӗтӗçтерет те сӑмах. Пайан та Петӗр сӑмахӗ Лисук ђӗрине кӗре-кӗре тухса, çӳçентере-çӳçентере илђӗ ӑна. Сӑмах икӗ ђӗрене курӑнми çыхӑпа çыхрӗ.

Лисук комсомола кӗме те кӑмӑл турӗ. Петӗрӗн кӑмӑлӗ хађђен улшӑнман пек, темле урӑхланса кайрӗ. Хытӑ ђӗреллӗ Петӗр Лисук çумӗнђе тепле труках улшӑнса, çемçелсе кайрӗ. Çак улахра Лисукпа калаçса ларнӑ хушӑра Петӗршӗн хађђен пӗлмен, туйман, сисмен тӗнђе уçӑлнӑ пекех туйӑнђӗ...

— Комсомолӗссем пиллӗкӗн, Иермолайӗв, епӗ, тӑватӑ хӗр тата шкул ађисене виççӗш-тӑваттӑшне йертсен - акӑ хайхи славнӑй пысӑк хор пулса кайрӗ-çке пирӗн,—терӗ хора йертсе пырас ӗçе хӑй çине илнӗ Шикайӗва уђитлӗ. Ђӑваш йурри тесен, Шупашкар петтехниккумӗнђен вӗренсе тухнӑ çамрӑк ђӑваш хӗрӗ ниçта кайса кӗме пӗлмен. Çав тери йуратнӑ вӑл тӑван кӗвве. Тӑватӑ çул хушши петтехниккум хорӗнђе тӑрса йурлани, йурӑ ӗçне ун ђӗринех витернӗ.

— Ӗç хута кайать, малтанлӑха питех те аван. Сурхуриђђен тата виçӗ ерне-ха.



4—525

Унђђен пĕр пилĕк-ултă йурă вĕренсен пит лайăхђĕ. Сирĕн халех ĕçлĕме пуçлас пулаŤ ĕнтĕ,— терĕ Петĕр Шикайĕва йеннелле çаврăнса.

— Епĕ ыранах хатĕр. Анђах ăçта пуçтарас-ха вĕсене?

— Мĕн пуçтармалли пур вĕсене, хăйсемех...

— Мĕнле хăйсемех? Хĕрсене хăйсемех пухăнĕç тетĕн-и-ха-есĕ? — терĕ Шика йĕва Петĕре калама ђарса.

— Ђим-ха. епĕ каласа петереймерĕм. Улаха та йураŤ. Вĕсенĕ труках шкула улахра хăйсемех пухăнаççĕ вĕт. Вĕреме йе вуламалли çурта пухма йăвăр пулаŤ-ха. Вăтанаççĕ те вĕсем. Комсомолĕссенĕ ђĕн те кай вĕсем патне. Акă хайхи пĕр вăхăтрах икĕ ĕç пулса пыраŤ: улахĕ те çĕнелет, хĕрĕсем те çĕнелеççĕ, хорктушок та пулаŤ, — терĕ Петĕр кула-кулах.

— Тĕрĕс мар пек туйăнаŤ-им?

— Тĕрĕс, Петĕр, ес калани... Ес Хвĕтук патĕнђе çывратăн-и?—терĕ Шикайĕва Петĕр ХвеŤуксен пÿрђĕ йеннелле сулăннине курса.

— Çавăнта выртатăп. Сыв пулăр, ђипер çитсе çыврăр,— тесе алă пађĕ те Петĕр ХвеŤуксен çĕтĕк хапхи умнђе çухлђĕ.

Урамра тёттём çерлене касса хăйă çутисем урлă та пирлĕ хĕреслене выртаççĕ. Акă йур çума пуçларĕ те, йур пĕрҍисем урамри хăйă çуттинҍе выљама тапратрĕç. Унтан хăйă çуттисем пĕрерĕн-пĕрерĕнех сÿнсе пĕтрĕç. Йур тата хытăрах çурĕ. Ирҍҍен пĕтĕм çĕре шурă хăмаçпа сарса тухрĕ, йăвăçсем шурă шупăр тăхăнҍĕç, улăм витнĕ пÿртсем шурă калпаккисене тата пусарах лартрĕç.

14

Сурхури—йалти каҍҍăсемпе хĕрсен кĕтнĕ праçникĕ çитрĕ. Çĕнçул кунĕ йалта хресҍен çамрăкĕсен каçĕ туса ирттереççĕ. Çĕнçул çĕрĕ каҍҍăсемпе хĕрсем аслашшĕсен йăлисене çĕнетеççĕ. Хĕрсем каҍҍăсенҍен вăрттăн хăтланасшăн. Каҍҍисем хыçалтан йĕрлесех çÿреççĕ. Хĕрсене тытса йур çинҍе йăвалантарса ҍăмăртаççĕ.

Хĕрсем çапнă капанран кĕлте туртса тырă пĕрҍисене шутлаççĕ: кам пуйана, кам ҍухăна каҍҍа тухассине пĕлеççĕ, Урари çăпатана салтса вырăсла хапха урлă ывăтса хăш йеннелле каҍҍа тухассине ҍухлаççĕ. Çулсем хĕресленнĕ вырăна кайса йĕке çавăрса, йе выртса итлесе

пулас упăшка усал, йе йăваш пулассине пĕлесшĕн çунаççĕ. Ҫăх тытса кĕрсе ун умне шыв, кĕл, кĕрпе лартса параççĕ: ҫăх кĕрпе çисен, пуйан пулаť тет, шывне ĕçсен, ерех ĕçекен упăшка лекмелле тет. Хăшĕн ҫăххи вара турă кĕтессине иккон умне вĕçсе хăпарса лараť, ун упăшки вара пит пуçсăр çын пулмалла тет. Хăшĕн ҫăххи пуçне ҫиксе сĕтел айне кĕрсе лараť, вара ун упăшки пит мĕскĕн, йăваш çын пулаť тет.

Темне те пĕлме тăрăшаççĕ çĕнçул çĕрĕ ҫăваш хĕрĕсем. Темне те каласа параççĕ иккен вĕсене аслашшĕсен йăлисем...

Лисуксен улахĕнҫи хĕрсем те çĕнçул çĕр ларма тăма пĕлмерĕç. Тӳсеймест çав çамрăк хĕр ҫĕри, пурне те пĕлесшĕн. Упăшка пурлăхлă пулĕ-ши, йе ҫухăн пулĕ-ши? Йуратĕ-ши, йе хĕнесе усрĕ-ши?

Акă хĕрсем улахран тухрĕç те Унищĕмĕн шитти картине хăлаçлама кайрĕç Унищĕмĕн шитти шутлама лайăх: ансăр хăмаллă пĕлтĕр кăна тыттарнă çĕнĕ шитти. Хăлаçа нумай кĕрет.

Йанахсене шитти хăми çумнех çыпăçтарса, икĕ алла мĕн вăй çитнĕ таран тăсса хăлаçласа илеççĕ малтан хĕрсем. Вара пĕр аллипе:

— Пура, шăналăк, мăйăх; пура, шăналăк, мăйăх... тесе хăлаçласа илнĕ шитти хăмисем пĕтиҫҫен шутлаççĕ. Иулашкинҫен пура тухсан—пуйан, шăналăк тухсан —вăтам, мăйăх тухсан—ҫухăн упăшка лекет тет.

Верукăн йулашки шитти хăми çине „мăйăх“ килсе тухрĕ.

— Ей, шуйтан çăпати,—терĕ Верук тарăхса. –Паçăр улăм пĕрҫисем туртнă ҫух пурлăхлă пулҫĕ, хаљ мăйăх тухрĕ. Кушак пăхĕ ĕненмелли пур-и ăна?

— Ну, мăйăх пултăр, ҫухăн пултăр. Совет влаçĕ ҫухăнсене пуйансенҫен питрех килĕштерет. Хаљ ҫухăнсем луҫҫă малти вырăнта!—терĕ Лисук кулса.

— Тек ним те тумастăп, ниçта та каймастăп—ывăнса та çўреместĕп пустуй йапалашăн. Анне те пайан: ы-ой, сурхуринҫе тĕл килни пурнăçра пурте пулас пулсан, епĕ темле пуйана каҫҫа кайса, ҫул çуртра та пурăнмаллаҫҫĕ пулĕ те, ав халĕ лашасăрах пурăнатпăр, терĕ.

— Ей, хĕрсем! тесе ҫĕнсе илҫĕ маларах утни. Ăна хăвăртрах хуса çитрĕç.

— Тухнă-тухнă, тавай сурхури майĕпе ҫиркў вуттине пĕрер çĕклем кайса йăтар... Кĕçĕрхи çĕр çын курсан та нимех

те калас çук. Пирĕн улах вутти пĕтнĕпе пĕрех унта... терĕ шăппăн пĕр хĕрĕ.

— Ҫăнах та... Аҫăр! терĕç харăс виç-тăват сасă шăппăнах.

Тепĕр минутран пиллĕк хĕр ҫиркӳ картишĕнҫен пĕрер çĕклем йуман вутти çĕклесе уллахала шутарҫĕç.

15

Ҫĕнçул кунĕ каçхине Ҫавал йалĕнҫи комсомол йаҫейкки хуларан килнисемпе пĕрле çамрăксен каçĕ тăваҫ.

Малтан сурхури авалхи йăла иккенне çутатса паракан токлат. Унтан пĕҫĕк çпектаккăљ. Кулăшла пйесса пухăннă халăха астараҫ. Вара çĕнĕрен орканисат-силенĕ хор тухса йурлаҫ. Хорта Лисук таҫа тăватă хĕр, вĕсем те Лисукпа пĕрлех кĕнĕ крушока. Лисук комсомола кĕрсен, хĕрсене й ертсе пыраканнийех пулса кайнă.

Хор стсенă çинҫен тăван йурăсене шăрантарса паҫĕ. Хуларан килнĕ комсо-молĕссем те хора пулăшма тăнă. Шика-йĕва уҫитлĕ рекĕнт вырăнҫе. Комсомо-лĕссем тунă хор Ҫавал йалĕнҫе пирвайхи хут илемлетнĕ ҫăваш йуррисене йантратса йаҫĕ, Ҫавал йалĕ унҫҫен илемлетнĕ тăван йурра илтсе курман. Ҫавăнпа хор йурлани ваттисене те пит кăмăла кайрĕ.

Петĕр хçрта йурласа тăнă ђухне те кусне Лисук çинђен илмерĕ. Унăн хăлхисем те Лисук сассине ытараймасăр çăтса тăђĕç. Комсомола кĕнĕ хыççăн Лисук Петĕршĕн тата çывăхрах çын пек, кирлĕ йулташ пек туйăн пуçланă. Йађейккă ĕçĕпе ђас та ђас сĕртĕнкелесе Петĕрпе Лисук пĕрпĕрин патне çывхарарах пырса туслашсах кайнă.

— Ех, кăмăллă-çке ĕнтĕ хĕрĕ те! Йулташ вырăнне те ытармалла мар çын-çк! тесе шухăшсанă Петĕр.

Веђђăрта ташăсемпе вăйăсем пуçлансан, Лисук хăйĕн ђун хавалĕпе пурне те труках хаваслантарса йађĕ. Кĕслепе тухса ташларĕ те Лисук, ун хыççăн пурт тускалса кайрĕç. Мĕн пур хĕрĕ йарăнђе хашăра. Мĕн пур кађђи ура тапсах сикрĕ еђђăрта.

16

Веђђăр хыççăн Петĕр Лисука ăсатма кайрĕ. Уничĕм тĕлне çитеспе Лисукпа Петĕр хыçалтан çынсем лашапа килнине курса айăккинлле пăрăнђĕç. Патнерех çитсен Уничĕмĕн ўсĕр сасси илтĕнђĕ Унпа пĕрле çуна çинђе тата тепĕр çын ларса пынă.

— Ей, епир тумастпӑри вара? Епир кам? Пирёнпе ан çыхлан луђђӑ. Пётеретпёр...

— Тӑватпӑр çав. Епир, епир-и... Пире таçта кайсан та паллаççё. Тӳрех: Фетӑрђӑ, тесе ђёнеççё. Кӑпираттивнӑй... ерттелнӑй... Саккас пур. Укçа пур. Ёçле туђккӑ Çавал Унисём пур ђухне. Унисём тӑрантарать вёт сире, шайттан пыршисем...

Çапла харкашса Унисёмпе тепёр çын Унисём патне кёђёç. Лисукпа Петёр вёсем калаçнине Унисёмён урамри ампарён хӳттинђе итлесе тӑђёç.

— Кусем ӑçтан килђёç вара капла? ыйтрё Петёр Лисукран.

— Вёсем Шупашкара кайнӑђђё.

— Тепри кам вӑл?

— Пёренкке Кёркури—кармаçӑвар, йал куштанё вӑл. Унисёмпе пёрле хӑтланать. Происвотсойусран саккас илсе килђёç пулё ёнтё ђӑпта çапма,—терё Лисук.

— Мён „ерттелнӑй“ текелесе калаççё-ха вёсем? Ерттел йађёпе ёçлемеççё пулё, вёт, вёсем?

— Темле лай ххӑн пёлейместёп те анђах кёрккунне перро Унисем патенђе пухӑнса ерттел çинтђен калаçнине астӑвӑтӑп. Мён тунине пёлместеп вара, Тен ерттел те тунӑ пулё. Тёрёссипе унта пур-

пĕрех нимĕнле ертрел те çук, пĕтĕмпех Унисĕм. Пурте ун кăсйине кĕрет.

— Тĕрĕс каластăк суйа ерттел пулаŤ ĕнтĕ вăл? терĕ Петĕр Лисук çинелле пăхса.

— Паллах ĕнтĕ вăл. Хаљ ĕçре нимĕнле ерттел те çукки курăнсах тăраŤ, вĕт. Унисĕм хуçа, мĕн тăвас тенĕ çавна тăваŤ... Лисук сасси сасартăк ђĕтресе карĕ.— Ниçта кайма çукран пурăнатăп çав епĕ те Унисĕм патĕнђе,—терĕ Лисук. Вара тӳсеймерĕ, ун куçĕсенђен куççӳл шăпăртатса анђĕ.

— Лăплан-ха, Лисук. Епир ĕçе тӳрлетме çулсем шыраса пăхăпăр,—терĕ Петĕр Лисука хăй çумнерех тытса.

— Ђĕрем çунаŤ... Йытă вырăнђе пурăнтăп вĕт епĕ ун патĕнђе... Сăмахсăр апат çимелле мар. Арăмĕ тем те пĕр каласа хăртаŤ. Ак çири кĕрĕке çурмалла акнă тырра сутса тунă укçапа тунă-ха. Унисĕм те, арăмĕ те çын çинђе:—Лисука кĕрĕк те çĕлетсе патăмăр, çапах ĕçлесшĕн мар, йулхав хĕр, тесе сăмахласа çӳреççĕ. Вĕсем тăриђђен ĕçлесе ывăнатăн-ха, çапах çапла калаççĕ. Икĕ çул ĕнтĕ Унисĕм патĕнђе ĕçлеме пуçлани, хăй укçипе мана пĕр йапала туса паман вăл. Ак çак урари ђоссăнккине те çулла праçниксенђе хĕрсемпе тыр вырма кĕрĕшсе кайса тупнă

укçапа илнĕ. Вăхăҫĕпе варпа аптăрат хăй, вилмест иçмасса пĕр хутҫен,—терĕ Лисук вĕриленсе.

Унăн ҫĕри халиҫҫен тӳссе пурăннине пайан тула кăлармасăр тӳссе тăрайман. Лисукăн ăшҫикĕ ытла та пит тулса çитнĕ Вăл çав хушăра Петĕре ыталаса илсе:

— Ан хăвар кунта, илсе кай хупа пĕрле хулана. Курассăм килмест Унисĕм ерешмен картийĕ ăшĕнҫе путланнă йала! тесе йăлăнма та хатĕрҫҫĕ те, анҫах хăйĕнҫен хăй вăтанни ăна апла тума ҫарса тăҫĕ. Çавăнпа вăл Петĕре алă парсан, Петĕр тата пăртак ҫăмăртаса тытса тăрасшăн пулнине сиссен те, аллине васкаса туртса илҫĕ те:

— Çывăрас ĕнтĕ, сывă пул! тесе ҫупса кĕрсе кайрĕ.

Хĕллехи уйар каç лăпкăланҫĕ, пĕлĕтри çăлтăрсем каҫҫăпа хĕр шăппăн çеç уйăрăлса кайнине курса, куçĕсене хĕссе, хавассăн кулса йулҫĕç.

17

Сурхури ҫасах çынсем пуçĕнҫе тĕлĕкре пулнă йапала пекех тăрса йулҫĕ. Вăхăт шурĕ.

Лисук комсомола кĕрсен хĕр-уҫитлĕ Шикайĕвăпа çывăхах туслашса кайнă.

Нумай йапала вӗрентнӗ комсомол Лисука. Шикайӗвӑ ӑна пӗрмайах пулӑшса пынӑ. Пушӑ вӑхӑтра шкула, йе вуламалли ҫурта кайса килмесӗр ҕӑтайми пулса кайнӑ Лисук. Шкулта пионер отреҕӗ тусассӑн, йаҕейккӑ Лисука отретра ӗҫлеме хушнӑ. Пионерсемпе ӗҫлеме тапратсан, Лисука Мускаври пурнӑҫ йала куҫса ҫӗнӗрен пуҫланнӑ пекех туйӑннӑ. Пионерсем хушшинҕе вӑл хӑйӗн пӗтӗм хуйхисуйхине манса кайса, аҕасен хаваслӑхӗпе хаваслаппӑ.

Унисӗм арӑмӗ Лисук комсомола ҫырӑннине илтсен, тем те пӗр каласа кулмасӑр, вӑрҫмасӑр кун ирттермен. Халиҕҕен хушман ӗҫсене тутарма пуҫланӑ.

Лисук унҕҕен те Хриҫтук кӗписене ҫуса тасатса тӑнӑ. Комсомола кӗнӗ хыҫҫӑн Хриҫтук хӑй йӗмне те Лисука ҫутарма тытӑннӑ. Хӑйӗн вараланҕӑк йӗмӗсене йури Лисук кӗпесене ҫума тытӑнсан тин, ӑна кӑтартса пырса пӑрахнӑ. Лисук ҫиллипе Хриҫтука пӑхмалла мар, хӑйтавраш лӗ йӗмӗсене йури ҫумасӑр пӗр-пӗр ҫӗре ҕиксе хӑварнӑ. Вара Хриҫтук ҫиллине шӑрантарйми йатлаҫма тапратнӑ.

— Йал йытти, каскӑн арҫынтарук, такам ҫыннипе те, таҫта та выртса ҫӳретӗн пулӗ. Епир кӳртмен пулсан пуҫта-

ракан çеç пулмалла, вĕт, ес! Çапла тем те пĕр каласа вăрçнă вăл Лисука.

Лисук ăна хирĕç нимĕн те ђĕнмен, анђах вăл каланине те пĕр хăлхаран кўртсе тепринђен кăларса йанă. Комсомола кĕрсе ĕçлеме пуçланăранпа ăна çĕнĕ вăй хутшăннă пек туйăннă. Çав курăнми çĕнĕ вăй ăна нимрен те тăрукак хăраса ўкме паман, тем пек йăвăр вăхăтсенђе те ун пуçĕнђе ĕлĕкхи пек тискер шухăшсем çуралман.

Ку таранђен Лисук Хриçтукăнне кашни мунђа кĕрсе тухнă хыççăн, купарђа таран, вăрăм çўçне тураса йанă. Хриçтук, çўçне туранă ђухне, сĕлĕ ђăпти пек мăнтăрскер урисене ђаркаласа, виç витре кĕрекен сăмавар пекех пăс кăларса, машлатса ларнă.

Иртнĕ ернере Лисук Хриçтукăн ирсĕр сăмаххисем çине тарăхса хăйĕн йаланхи ĕçне туман. Хриçтук темиçе хут каласан та ун çўçне турама ларман. Кĕрĕкне тăхăннă та вуламалли çурта кайнă. Çак кунтан вара вĕсем тўрленеймиимхирĕçсе кайнă.

18

Пĕр хĕллехи хĕвеллĕ кун йала ирех хыпар сарăлнă.

— Унисӗме тытса кайнӑ тет... Илтмени?

— Мӗншӗн-ши?

— Шупашкарта суйса укҫа нумай илнӗ тет.

— Мӗнле-ши ара?

— Темле, суйа ерттел тунӑ теҫҫӗ.

— Тулӡӗ иккен шалӡи... Пӗренкке Кӗркурипе йаланах хӗрӗнкӗ ҫӳреӡӡӗҫ.

— Пӗренккине кирлӗӡӡӗ...

— Пӗлмесӗр ан шарла-ха. Хӑшӗ комсомолсем ҫырса панӑ теҫҫӗ.

— Ха-а... Пулӗ, пулӗ. Тем те пулӗ...

Ҫапла сӑмах сарӑлнӑ йалта. Малтан шӑппӑнрах хӑракаласарах калаҫнӑ, кайарахпа хӑрами те пулса кайнӑ.

— Ҫав кирлӗӡӡӗ-ха. Ҫитрӗ иккен ҫимӗк ун ваљљи те. Пуҫӗпех пӗттӗр. Кайнӑ ҫӗртен ан тавӑрнайтӑр! тесе ылханакансем те тупӑннӑ.

Унисӗме, хӑй нихҫан кӗме шутламан ҫӗре, Шупашкарти пуљнитсапа йунашар ларакан шурӑ пӳрте кӳртсе лартнӑ. Ларать Унисӗм ӡӳреӡерен пӑхса. Пуљвар ҫинӡе ҫӑкасем сивӗ ҫилпе ҫара тураттисене силлесе, хумханса лараҫҫӗ. Унисимӗн те пуҫӗнӡе тӗрлӗ шухӑш хумханать. Ӑшӡикӗнӡе тем пӑтранать.

„Ех, кайасђё хаљ Çавал йалне. Кёрсе ларасђё сарлака сётел хушшине. Лисука пёр витре сăра ăстарса кўртесђё. Арăм шăрттан тураса хутăрђё ума. Ёçесђё вара.. ёçесђё тăраниђђен, сётел хушшинђен тухайми пулиђђен. Ех, ёçесђё!...“

Кайма çук çав, тухма çук.

Ђўређи тимёр решаткаллă. Ђул хўми пёр ђалăш ытла çўллёш. Хўме леш йенђе йури тунă хурал ўплинђен хёрлё салтак штыкё хёвел шевлипе йăлтăртатса хăрататť.

## 19

Çуркунне йеннелле сулăннă хёвел вуламалли çурт ђўређинђен пит ăшшăн пăхнă. Йермолайёв пайан ирех йалти комсомолёссене вуламалли çурта пуçтарнă. Хаљ вёсем унта хуларан Петёр лартса килнё происвотсойус инструктăрёпе çёнё ерттел тăвасси çинђен пит хёрўллён калаçнă. Инструктăрпа Петёр сăмахёсем хыççăн, ерттел тăвас шухăша комсомолёссем пурте кар йарса илсе ăна тăвасшăн вёреме тытăннă. Ку шухăша Лисук тата питрех хапăл туса илнё. Йулашкинђен пурте пёр шухăш çине килсе, йађейккă пайанах ерттел тăвас тёлёшпе ђăпта çапакансен пуххине пухмалла йышăнатť.

Кун хыççăнах комсомолĕссем вуламалли çуртранах йал тăрăх ҫăпта çапакансене пухха йăхăрма тухса ҫупрĕç. Йалĕ пысăк, урамĕсем вăрăм, таçтан тăсăлса выртаççĕ пулин те комсомолĕссем кĕмен кĕтес йулмарĕ. Шывсаманҫе пĕтĕм йал тăрăх ҫупса çавăрнҫĕç. Кашнин ҫĕрийех çĕнĕ пысăк ĕç пуçласа йанипе хавасланса тапаť.

Ҫăпта çапакансем те ҫăпта ĕçĕ пирки пухăннăран, те Унисĕм ĕçĕсем çинҫен тĕплĕрех пĕлес шутпа пит нумайах кĕттермерĕç. Ку ĕнтĕ Унисĕме хупнăранпа йалта ҫăпта çапас ĕç йапăхланнăран та килнĕ пулĕ.

Лисукпа Шикайĕвă пилĕк-ултăхастартарах хĕрарăмсене хăйсемпе пĕрлех йертсе пыҫĕç пухха.

Пухха пынă çынсем лармалли вырăн çитменнипе урайне, кăмака çумне тайанса ларса пăхăрланă кукăр ҫăпăклă ҫĕлĕмĕсене çавăрса тытрĕç.

— Пухăва уçас пулаť. Пуху пуçлăхне кама тăватăр? — терĕ Йермолайĕв сĕтел хушшинҫен.

— Сана тăвас, — терĕç виç-тăват сасă.

— Лисука суйлас, — тесе çухăрҫĕ пĕр хĕрарăмĕ.

— Урăххи çук-и?

— Çук, çук. Тавай пуçлăр.

Лисук сĕтел хушшине протоккол çырма кĕрсе ларђĕ. Йермолайĕв происвотсойус инструктăрне сăмах пађĕ. Инструктăр сăмахне ним шарламасăрах итлерĕç.

— Ку таранђен есир Унисĕм аллинђе ерешмен картине лекнĕ шăнасем пекех пулнă. Малашне çавăн пек çăрттансен аллине лекес мар тесен, хăвăр ĕçрен кирлĕ пек усă курас тесен, сирĕн пĕр çул анђах — ерттел туса ĕçлесси анђах йулаť, — тесе пĕтерђĕ инструктăр хăйĕн сăмахне.

— Тĕрĕс ĕнтĕ сан сăмах, кађакана купăста пахђине кӳртсе йарса ђыхтарнăпа пĕрех пулђĕ çав! терĕ Вăрăм Павăл пуçне хыçса.

— Ара, ара, çапла пулмасăр, — тесе илђĕç хĕрарăмсем харăс.

— Калас текенсем тавай тăрăр та калăр, нимрен те хăраса тăмалли çук кунта, — терĕ Йермоллйĕв ура çине тăрса.

— Вăт епĕ хам ухмах пуçпа çакна калам-ха, — терĕ пĕр хĕрарăмĕ çĕкленсе: — Кавта пире Совет влаçĕ ирĕк панă, хаљ епир Унисĕм йышшисенђен айа йарса пурнатпăр. Премĕ калама намăс. Акă кăçта килсе ларнă пире Унисĕм-

сем! — хĕрарăм хăй ĕнсине тытса кăтартрĕ. Упăшкам Кермани вăрçине кайса вилнĕренпе йалта ырă пурнăç курса пулмарĕ. Претçетаттĕлĕ те çавăн йышши пирĕн: унта-кунта каймалла пулђĕ, халăх ĕçĕ пулђĕ, нихçан та çук, пирĕн çине тийеççĕ. Вĕсем ĕçлĕ çын, виш вăхăт çук. Пирĕн арçынсăр хĕрарăмсен тӳсмелле, пирĕн пур иккен вăхăт. Ăçта кунта саккун?!

— Уçтук инке, есĕ ерттел пирки калаха, — терĕ Йермолайĕв, пуху пуçлăхĕ.

— Ерттел çинђен... ерттел çинђен те калатпăр. Акă йулташ, хуларан килни, Унисĕм суйа ерттел йађĕпе ĕçлени çинђен び каларĕ. Суйа ерттеле Унисĕм кампа тунă тетĕр есир? Претçетаттĕлпе пĕрле ĕçленĕ ăна, вĕсем пĕр шайккă...

Пуху вăйлă çăмăр хыççăн татса кайнă пĕве пекех кĕрлесе кайрĕ.

— Ђимĕр-ха, пурте харăс ан калаçăрха, атту пĕрин сăмахне те илтсе йулаймăпăр. Ђеретпе, йулташсем! Павăл пиђђе сăмах илет, — терĕ Йермолайĕв. Вăрăм Павăл тăрса çĕлĕкне хывсанах пуху шавлама ђарăнђĕ.

— Кунта Уçтук инке пит тĕрĕс каларĕ ĕнтĕ. Манăн та халђђен каламаннине те пайан каламасăр ђăтса пулмасть.

Суйа ерттел вăл йалсовет преçетаттĕлĕ хутшăнмасăр пулманни инструктăр каланинђен те паллă. Суйа протокколсене ĕнентерсе параканни кам пулнă? Претçетаттĕл. Ăна та айăпламасăр хăварма йурамасть. Хĕрлĕ салтак çемйисен ваљљи килнĕ пĕр тељанккă вăрмана ăçта хуђĕç? Униçĕмпе Ђурнух — претçетаттĕл иккĕш касрĕç. Пренкке Кĕркури те вĕсемпе пĕрлехине кĕнĕ. Ав, Пренкке унта ларать-ха, кала-ха кунта халăх умĕнђе тĕрĕс-и ман сăмах, йе тĕрĕс мар-и?

Пренкке Кĕркури, алăк патĕнђе тăраканскер хыçкаланса илђĕ те:

— Мана вăрманĕ мар, пўрнеске тĕпĕ анђах лекнĕ, — терĕ.

— Çавă çав, пўрнеске тĕпшĕн ес ђунна та пама хатĕр. Аçта ерех килет-ши тесе сыхласа анђах çўретĕн çав хута. Çапла Ђиперуй рошђинђен хĕрлĕ салтак çемйисем ваљљи панă утмăл тĕп çăкана Униçĕмпе Ђурнух çăтса йађĕç. Пĕрин пырне ларђĕ хуть, тепринне хăçан ларать-ши?.. Ерттел пирки ман ним каламалли те çук. Тăвас пулать. Ерттел уçмалла. Епир ђăпта çапмасăр тăрас çук. Ерттел тусан совет та пулăшать. Анђах кармаçăварсене, Униçĕм хўрисене, ерттел йахăнне те йамалла мар. Униçĕм патĕнђе

ĕçлесе тăрантăмăр ĕнтĕ çитет. Тăват çĕр ҫăпта укçи ку таранҫен те илмен-ха... Вăрăм Павăл çамки çине тапса тухнă шултра тумламлă тарне шăлса илҫĕ те тенкел çине ларҫĕ. Вара пĕри хыççăн тепри тухса каларĕç. Пурин те сăмахĕсем пĕр çĕреллех, ерттел тăвас шухăш таврах тĕвĕленсе пыҫĕç.

Ну, сăмах-йумах пĕтрĕ-и? Паçăр инструктăр каланине астăватăр пулĕ; ерттел уçăлсан ăна ĕçсене пуçласа йамашкăн происвотсойус халех 200 тенкĕ укçа парать. Тата Унисĕм происвотсойусран суйа ерттел йаҫĕпе илнĕ 800 тенкĕ укçана сут урлă шыраса илсе ерттеле параççĕ. Сасăлатпăр-и, йулташсем,— терĕ Йермолайĕв

— Сасăлас, сасăлас...

— Кам ерттел уçас тет — алă çĕклĕр! Пурте çĕклерĕç, пĕр Пĕренкке Кĕркури анҫах çĕклемерĕ.

— Ĕнтĕ пирĕн ерттел ĕçĕсене туса тăма правлени суйламалла. Кама суйлас тетĕр, виçĕ çын кирлĕ.

— Павăл пиҫҫене!...

— Лисука!...

— Тепĕрне сана хăна суйлас, теççĕ Йермолайĕва.

— Епĕ ҫăпта ҫапмастăп вĕт, есир хăвăр хушăран суйлăр-хр,— тет хирĕҫ Йермолайĕв.

— Ҫтаппана суйлас, Ҫтаппана... Салтакра та пулнă, хута пĕлекен ҫын,— терĕҫ ваттисем.

Правленине Вăрăм Павăла, Лисука тата Ҫтаппана суйласа лартрĕҫ. Вăрăм Павăла претҫетаттĕл, Лисука ҫекреттар, Ҫтаппанне укҫа тытаканни (каснаҫҫей) турĕҫ.

Ҫухăн Ҫтаппан та пайан нихҫан курман ҫыс курҫĕ. Ытла та ҫухăн пурăннă Ҫтаппан. Ун пўрҫĕ те ҫĕр айне путса кеме тытăннă. Ҫўреҫе йанаххисем ҫĕрпе шайлансах ларнă. Урамалла тухакан икĕ ҫўреҫи киттай ҫыннисен куҫĕсем пекех ҫалăшшăн пăхса ларнă.

Ҫапла ҫăн-ҫăн ҫухăнсен ҫăпта ерттелĕ пулса тăҫĕ.

— Йулташсем, ерттел турăмăр ĕнтĕ. Униҫĕмрен хăтăлтăмăр. Пуринҫен те хăтăлас пулаť. Пирĕн ĕҫе ҫăрмантаракансене ҫул ҫинҫен тасатасах пулаť. Акă кунта Павăл пиҫҫе те, Уҫтук инке те йалсовет претҫетаттĕлĕн киревсĕр ĕҫĕсем ҫинҫен тухса каларĕҫ. Совет саккунĕ унашкал ҫынсене ним хĕрхенмесĕрĕх сирпĕтме хушаť. Совет саккунĕ тăрăх епир

вăл претçетаттĕле вырăнтан кăларса урăх суйлама та пултаратпăр. Çавăнпа кун пирки, йулташсем, çапла йышăнас шухăш пур:

„Çавал йалсовет претçетаттĕлĕ Ҕурнух кулаксемпе çыхланса йалта киревсĕр ĕçсем туса пынă пирки, вулĕçтăвкомран ăна вырăнтан кăларса урăх çын суйласа лартмашкăн ирĕк пама ыйтатпăр“.

Кунта пирĕн йалăн виç пайĕнҕен пĕр пайне йахăнах пур. Çавăнпа епир ыйтнине вырăнсăр хăварас çук пек туйăнаť. Йышăнатпăр-и кăна, йулташсем?

— Йышăнас! терĕ харăс нумай сасă.

Ҕухăнсем пуху пĕтсен те вуламали çуртран ҕас каймарĕç. Ратио итлерĕç. Ратио пĕтсен те ҕылайҕҕен пурнăç çинҕен калаçса ларҕĕç.

20

Шавлаť те кашлаť Сĕмĕл пасарĕ. Йăшăлтатаť етем. Çын пуçĕсем ăшаланă пăрça пекех сиккелеççĕ. Пĕтĕм пасар вырăнĕ етем сывлăшĕпе пăсланса тăраť. Сивĕ.

Алсисене хире-хирĕç çапса пĕр вырăнтах ташласа тăракан усламçăран Вăрăм Павăл сӳс тилкепе илҕĕ те, каçа йулас марҕҕĕ тесе, ватă шăмшакне хускатсах

лаша кӳлме ҫупрӗ. Вăрăм Павăл пасар хушшинҫен тухнă ҫухне ăна пӗр сасă:

— Павăл пиҫҫе, ăҫта пит васкатăн? тесе ҫӗнсе илҫӗ. Вăрăм Павăл икӗ хутҫен те калле-малле ҫавăрăнса пăхрӗ, анҫах кам ҫӗннине ҫухласа илеймерӗ. Малаллах ӳпӗнҫӗ.

— Паллаймастăна-и мӗн? терӗ ăна пӗр хӗрлӗ салтак тумтирӗ тăхăннă ҫын ҫула пӳлсе.

— Иакур, ес мар-и?.. Кам ҫӗнет тетӗп. Ахаљ тем тусан та паллас ҫук, сасран анҫах уйăрмалла. Сăнран пулсан, паллас ҫук. Мӗнле майпа?...

— Стантсăран килетӗп.

— Еп лаша илтӗм-ха... Киле тавăрнатăн пулӗ, вӗт?

— Киле халӗ те, лав тупаймарăм-ха.

— Ара айта хампа, ҫара ҫуна ҫеҫ те ман, ӳксе йулмăпăр-ха. Айта. Вăрăм Павăл Иакура хăй хăваттерне илсе кайрӗ. Тепӗр ҫур сехетрен вӗсем ҫара ҫуна ҫине умлă-хыҫлă ларса Сӗмӗл пасарӗнҫен тухса карӗҫ. Вăрăм Павăл хăй ӗмӗрӗнҫе мӗн пуре те икӗ ҫул анҫах лаша усраса курнă. Вăр ӗҫ пулни те нумай пулаť ӗнтӗ. Кермани вăрҫи тухиҫҫенех пулнă вăл. Вăрҫă тухсанах Вăрăм Павăла унта илсе кайнă Вăрҫăран аманса киле тавă-

рӑннӑ·ҫӗре вара лаша пулман, ӑна арӑмӗ аптраса сутса йанӑ. Ҫавӑнтанпа лашасӑрах пурӑнат Вӑрӑм Павӑл.

Йакур ҫара ҫуна ҫине урисене хутласа ђалӑшшӑн ларђӗ, малалла пӑхса ларса пыракан Вӑрӑм Павӑл ҫине пӑхрӗ. Вӑрӑм Павӑлӑн килти тӑларан тунӑ аҫам арки айӗнђен ҫар кӗрӗк арки курӑнђӗ Йакура. Йакур Вӑрӑм Павӑл ҫӗнӗ кӗрӗк тӑхӑннине тин астурӗ. Унтан Йакур куҫӗ Вӑрӑм Павӑл ӗнси ҫине куҫрӗ. Вӑрӑм Павӑл енси ӗлӗкхинђен йакалнӑрах пек, тата йанах шӑммисем те ӗлӗкхи пекех кӑнтарса тӑман пек туйӑнђӗ Йакура. Вӑрӑм Павӑла пит хыткан, типшӗм ҫын пулнине астуса илђӗ Йакур. Хаљ пађах урӑхла курӑнђӗ ӑна Вӑрӑм Павӑл, унӑн ӗлӗк айакранах паларса тӑракан шӑммисем ҫумне ӳт хутшӑннӑ курӑнсах тӑнӑ. Сухалли те Вӑрӑм Пӑвӑлӑн хаљ темле ҫӑрарах тапса тухнӑ. „Вӑй илсе пырат пулмалла. Ураланат ӗнтӗ“ тесе шухӑшласа илђӗ Йакур хӑй ӑшӗнђе, Вӑрӑм Павӑла сӑнаса пӑхнӑ хыҫҫӑн. Унтан пӗрре хыттӑн ӳсӗрсе пыр шӑтӑкне тасатса илђӗ те:

— Ураланатӑн иккен, Павӑл пиђђе? терӗ Йакур тӗреклӗрех вырнаҫса ларса.

— Ма?...

— Ара лаша илнӗрен калатӑп.

— Е-е ураланасси... Хам укçа нумайах мар-ха унта, йулташлăхран илтĕм. Виçĕ çул ĕнтĕ лаша илес тесе ђлена кĕни. Кăçал тин пађĕç. Темле вăл пирĕн... Унисĕм пеккисене луђђă параççĕ. Унисĕм такăш вăхăтра çĕраллă тенкĕ сăптăрма ĕлкĕрнĕ унтан. Хаљ çак лаша укçине илме кайсан илтрĕм. Е-ей ара, сана Унисĕм çинђен каламан-çке-ха епĕ. Унисĕм тĕрмере ларат-вĕт-ха пирĕн. Ку сăмах хыççăн Вăрăм Павăл лашана хўтерсе илђĕ.

— Мĕн пирки апла? интересленсе ыйтрĕ Йакур.

— Суйа ерттел йађĕпе патшалăха улталанăшăн хупрĕç. Ерттел йађĕпе укçа илсе тăнă, таварне те илсе сутнă. Ку ĕç пулнă хыççăн происвотсойусран килђĕç, суйа ерттел вырăнне ђăннинех туса хутăмăр вара. Мана претçетаттĕле суйласа лартрĕç-ха. Сирĕн Лисук правлени ђленĕ, ăна çекреттар турăмăр. Ĕçлетпĕр-ха йерипен. Лисука курсан паллаймăн та-ха есĕ. Пысăкланса, ўссе кайнă вăл хаљ, сан пекех маттур. Ман патра пурнат вăл хаљ. Ей, хĕпĕртет ĕнтĕ сана курсан, пит савăнат ĕнтĕ...

Унисĕм патĕнђе пурăнђĕ вĕт икĕ çул. Тарăхса пĕтрĕ унта. Ман пата куçни пĕр уйăх ытларах анђах-ха. Унисĕме тĕрмене

илсе кайсан куçрĕ. Вăрăм Павăл Йакура йалти çĕнĕ хыпарсене йала çитиччен пĕтĕмпех каласа пама ĕлкĕрчĕ. Йала çитеспе сăмах каллех лаша çине çаврăнса çитрĕ.

— Ху пĕлен, — тесе пуçларĕ Вăрăм Павăл сăмахне кайалла çавăрăнса, — лашасăр çынăн пурнăç мĕнлине? Çуррине ĕçленĕшĕн парас пулать. Каллех, çын ĕçлени вăл паллах мĕнли... Пăраснана пĕр утăм илет. Пĕр шит шăйрăк хăварать. Мĕн каласси ĕнтĕ, чĕркелеççĕ те пĕтерреççĕ анана. Хура курăнтăр, вара йурать!... Тăрăхса çитнĕ ĕнтĕ, Йакур, хам ĕмĕр тăрăшшĕнче лашасăр. Илессĕм сунманччĕ лаша, латнă хал совет пулăшрĕ... Йакур тем шухăша кайса Вăрăм Павăла хирĕç тек чĕнмерĕ. Вăрăм Павăл калаçма чарăнчĕ. Çав вăхăтрах вĕсем йала çитсе кĕчĕç. Çанталăк халиччченхи каçпа сивĕтес йăлине тиркесе-и тен, пайан каçалапа уйрăмах ăшăтса йачĕ.

Йал варринчи çырмара туран йарăнакан ачасем сухăрашнă. Вăрăм Павăл лашине пĕрре чăпăрккаласа илчĕ те, тăвалла та чуптарсах хăпарса кайрĕ. Çырма варĕнчи ачасем:

— Мучи, тете, кăшт лартса кай-ха! Çунашкана çаклатса хăпарт-ха! Ей, ей,

пĕри çакланҕĕ! тесе çухăрса йулҕĕç. Çӳлте тăраканнисем Вăрăм Павăла паллаҫа илсе:

— Павăл пиҕҕе, кама лартса килен? тесе кăшкăрса йулҕĕç.

Каç пĕтĕмпех тĕттĕмленсе çитрĕ. Тăхлан тĕслĕ таҕка йăвăр пĕлĕтсем çĕре йĕри таврах хупласа илҕĕç. Темле хĕллехи çанталăка кĕркуннехи ҕĕрĕ сывлăш çапса кайрĕ.

## 21

Пĕр вырсарни кун комсомолĕссем ирхине ирех йал тăрăх пĕлтерӳсем çакса тухрĕç. Пĕр харсăртараххи ҕиркӳ алкумĕ умне те пырса çакнă. Кăнтăрлахи кĕлĕрен тухакансем сăхсăха-сăхсăхах пĕлтерӳ çине пăхаççĕ. Вара кайран ҕиркӳ çумне халиҕҕен кунашкал йапала çакманнинҕен тĕлĕнсе пыра-пыра пăхаççĕ.

— Мĕн хуҕĕ çыпăçтарнă унта, хăта?-ватă пулсан та пĕлесшĕн тăрăшат пĕр хĕрарăм.

— Пайан пуху пуласси çинҕен пĕлтереççĕ. Ҕурнуха старăстăран кăларса урăххине суйлаççĕ, тет карҕăка хура кĕрĕк тăхăннă кĕрпе арман хуçи хăйĕн сарлака сухаллине пĕтĕрсе.

Йал каллех çĕнĕ хыпарпа хусканҕĕ.

Каçалапа шкула пĕрерĕн-икшерĕнех çын тула пуçларĕ.

Вулăсран йури пĕр çын килнĕ. Вăл шкула малтанах пырса ларнă.

Ђăптапа ашăкланă алăк пĕрмайах уçăла-уçăла хупăнаť. Кашни уçăлмассеренех сивĕ сывлăш пăлкаса кĕрет пӳрте. Пӳртре ђĕлĕм тĕтĕмпе хутшăнса кайса ђасах çухалса лараť. Нарс уйăхĕн каçхи сулхăнĕ ђӳређесен кантăкĕсем çине тĕрлĕ тĕрĕсем тĕрлет майĕпе. Пӳртре сăран алса, тин çĕлетнĕ сар кĕрĕк шăрши килти хайар тапак шăршипе хутăшса сăмса шăтăкĕсене кăтăклаť.

Вулăсран килнĕ çынпа Йакура ним сăмахсăрах преçитиума суйласа лартрĕç. Претçетаттĕл хăйĕн ĕçĕсем çинђен калама пуçларĕ (мĕншĕн тесен вăл хăй ĕçлеме тытăннăранпа йалсоветђĕн пĕр лару та пулман).

— Тăвансем, ман ĕç çинђен хăвăрах пĕлсе тăратăр ĕнтĕ. Сирĕн куç умĕнђе ĕçленĕ пĕрмайах.

— Куç умĕнђине пĕлетпĕр, ес кут хыçĕнђе мĕн ĕçленине каласа пар! тесе йĕплеççĕ пĕр йенђен.

— Никама та сăтăр туман, халăх мĕн хушнине туса пынă. Саккун хушнине те вăй çитнĕ таран туса пыма тăрăш-

нă. Налукпа никама та уйрăм хĕсмен, аҕасене вĕренме кайма ҕарса тăман. Кирлĕ хутсене парса тăнă... Урăх ман сăмахсем çук, ыттине халăх хăй каласа парĕ,— тесе пĕтĕрҕĕ Ҕурнух претçетаттĕл.

— Çапла, тĕрĕс Илле Иванҕҕă. Лайăх ĕçлерĕн, тав тăватпăр. Пире урăх претçетаттĕл кирлĕ мар,— терĕç пуйанраххисемпе тара тытнă кармаçăварсем.

— Сирĕншĕн лайăх мар-и? Сирĕн арман та пур, лаша-ĕнесем те икшер, çĕрне те тара илсе акатăр, налукне çапах манпа лашасăр, упăшкасăр хĕрарăмпа тан кăна тӳлетĕр. Аҕăрсене патшалăх укçипе вĕрентме хутсем те туса паратăр вăл сире. Сирĕншĕн лайăх пулмасăр!—тăрса аллисене сулласах кăшкăрҕĕ Уçтук инке. Ун хыççăн пĕтĕмпех тапранса кайрĕç.

— Халăх укçине куштансене ĕçтерсе мĕн ҕул пĕтертĕн?

— Хĕрлĕ салтак çемйисен вăрманне ăçта хутăн?

— Çĕнĕ ампар кам укçипе лартрăн?

— Кирлĕ мар пире сан йышши!

— Сута пас, сутрааĕ !

— Лăпланăр-ха, йĕркелĕ калаçас пулать, тесе çухăрать вулăсран килнĕ çын.

— Мĕн калаçмалли пур, кирлĕ мар! Суйлас урăххине! тесе çĕмĕрлеççĕ ђăпта ерттел ђленĕсем.

Вулăсран килнĕ çын ним тума аптăрарĕ.

— Ну, кама суйлас, тетĕр еппин!

— Йакура суйлас, Йакура! тесе çухăрђĕç комсомолĕссем харăс. Кĕрпе арман хуçи тăђĕ те:

— Претçетаттĕл йулташ, Йакур çĕнĕ çын-ха вăл, йал пурнăçпе те паллашса çитмен. Пренкке Кĕркурине суйлас пулаť, пултаракан çын, ђухăн çын, — терĕ.

— Кирлĕ мар, Унисĕм хўрине суйламастпăр! тет ерттел ђленĕсене хăй тавра пухнă Вăрăм Павăл.

— Сасăлас Йакура! кĕрлет шкул.

Сасăларĕç.

Йакуршăн аллă çиђĕ çын, хирĕç вунпилĕк çын алă çĕклерĕç. Йакур мĕн пулнине лайăххăн сиссе те йулаймарĕ, тĕлĕкри пекех хăвăрт пулнăн туйăнђĕ, ăна ку ĕç.

Комсомолĕссем хĕпĕртенĕ.

— Претçетаттĕл çĕнелђĕ. Хĕрлĕ салтак, Лисук пиђђĕшĕ. Кунпа ĕçлеме пулаť...тесе йумахлаççĕ хăйсем хушшинђе.

Пуху пит шавлă саланђĕ.

Урамра Вăрăм Павăл Йакура хулăран тытрĕ те:

— Ну, Йакур тус, кӳлĕнессе иксĕмĕр те кӳлĕнтĕмĕр ĕнтĕ. Анђах лавĕ çăмăл мар вĕт, туртса кăларайăпăр-ши лавне?! терĕ.

— Мах памăпăр, Павăл пиђђе, пĕрле ĕçлĕпĕр. Пĕрлешнĕ вăйпа епир тем те туса хурăпăр, — терĕ Йермолайĕв хыçалтан хуçа çитсе.

— Пĕрлешӳре вăй! терĕ Йакур.

## 22

Макăрса-ахăрса, ташласа-йурласа тĕрлĕ тумлă çуркунне иртсе кайрĕ. Уйхирсемпе улăхсем çупкăç йурри йурласа, çурла кĕввипе тĕпĕртетсе илђĕç. Анса пулнă, хӳме пек ларан тырпул вырăнне çĕмел-суратсем пăтă пекех ларса тухрĕç уйра.

Лисуксем çăва тухсанах Вăрăм Павăл патĕнђен хăйсен килне куçнă. Мăксăрланнă пӳртне шалтан тăмпа сĕрсе хут çыпăçтарнă. Тултан пăхсан пит киђем пулин те, шала кĕрсен ытла та кăмăллă пулнă вĕсен пурђĕ.

Йал çыннисем вĕсем патне пырсан-тусан, матĕк литес пушшине асăрханă.

Йакурпа Лисук кивĕ икконсене пӳрт тасатнă ђухнех хуран айне хутса çунтарса йанă. Çтенасем çумĕнђе Йакур хĕрлĕ çартан илсе килнĕ плаккатсем тата Ленин, Карл Маркс, Ворошшилăв, Путоннăй сăнĕсем çакăнса тăнă.

Пиђђĕшĕ кĕтмен çĕртенех, сывă та паттăр хĕрлĕ салтак пулса тавăрăннăран вара Лисук ерттелре те, комсомолра та тата пысăкрах кăмăлпа ĕçлемен тытăннă. Вăл Йакура вилнĕ пулĕ тесе шутласа пурăннă. Çавăнпа Йакур сасартăк киле тавăрăнни Лисука, сăмахпа каласа пама çук, хытă савăнтарнă, ун ђунхавалне çунатлантарса йанă.

Лисук уттипе сахал çӳренĕ, унăн пĕрмайах ђупас килсе тăнă. Кирек мĕнле ĕçе те хăвăрт туса пĕтерес килнĕ. Пĕтермесĕр ђарăнас кăмăл пулман. Вăл çынсем ĕçе хăвăрт тăвайманнинђен тĕлĕннĕ.

Пайан та Лисук ирех, хĕвелпе пĕрлех тăрса пахђари тăкăннă улмасене пуçтарса кĕђĕ. Пиçсе çитнĕ помиторсене татса нӳхрепе кӳртсе хуђĕ. Шыва кайса килђĕ те, сапаланса урайне çуса тасатрĕ. Йакур тавăрăннă çĕре пурте хатĕр пултăр тесе сăмаварне те шыв тултарса лартрĕ.

Йакур йалсоветпа пулăшком ĕçĕсемпе ĕнерех вулăса кайнă. Лисук Йакур килессе кĕтет. Урам йенђи ђўређене йарах уçса йарса, Йакур килни курăнмасť-и-ха тесе пăхаť.

Урамра ђипер çеç выљакан ађасем кукăртан пăрăнса, кĕтĕвĕпех йалсовет патнелле ђупнине курса йулђĕ Лисук. „Мĕн-ма калах ђупрĕç-ши кусем"' тесе шухăшласа Лисук тинкеререх пăхрĕ. Иалсовет çывăхнерехри пўртсенђен хĕрарăмĕ-арçынни çав кукраллах васкаса тухса утрĕç.

«Мĕн амак пулнă-ши унта' кўр кайса пăхас» тесе, Лисук ђўређене хупрĕ те урамала тухса ђупрĕ.

Урам кĕтессинђен пăрăнсанах вăл йалсовет умĕнђе çынсем купаланса тăнине асăрхарĕ. Ăна курсан Лисук тата хытăрах ђупрĕ. Пуçри пушă çыхнă хĕрлĕ тутăр салтăнса кайрĕ. Лисук тутăра çыхмасăрах алла ђăмăртаса вĕçтерђĕ.

Патне çитеспе Лисук, çынсем йупа çумĕнђен кăкарса хунă пысăк ăратлă вăкăр тавра пухăнса тăнине курсан, лăпланђĕ. Тутăрне кайалла туртса çыхрĕ те çынсем ушкăнне пырса тăђĕ. Çынсем вăкăр çинђен калаçнă.

— Вот пирён йал кётёвё ваљљи çакăн пекки кирлёђђё. Атту пирён Уртемей вăкăрне путлё çынна кăтартма намăс. Ёнесем тарăхнипе сёксех вёлереççё ён-тё мёскёне.

— Уртемейё те хыт-каçмак, тыррине пуçтарать, вăкăрне тăрантармасть.

— Ей, каларăн çитернинђе-и вара вăл? Ăратти çавнашкал ун!

— Лайăхрах çитерсен çапах çёкле-нёђђё пăртак, хаљ ытла та урине те çёклейми пулнă-çке.

— Таппи çук ун, таппи!..

— Ха, ха, ха! Хырăм тулли кулăпа хумханать ушкăн. Хёрарăмсем тутисене тутăр вёçёпе хупласах кулаççё.

— Ку, вăкăр-тăк вăкăр! Уртемей вă-кăрне хăрах урипе тапса вёлерсе пăрахё ку! тёлёнеççё пăхса тăракансем.

Вăкăр ёнсинђен тыткаласа пăхаççё. Пуçёнђен шăлса ађашлаççё. Вăкăрё ним шарламасăр, пуçне пăркаласа, хўрине вёлт-велт ывăткаласа, пит мăнкăмăлăн пăхать сынсем çине.

Йалсовет алкумёнђен Йакур тухрё кулкаласа. Шўреке тăрăлă хёрлё çăлтăрлă хёрлё çартан тăхăнса килнё çёлёкне ёнсе çинерех лартнă.

Тухсанах Лисука ђёнсе илсе çыру



6—525

тыттарђĕ. Лисук темшĕн пит хĕпĕртесе, пĕр хĕрне кайса вулама тытăнђĕ.

— Мĕнле, вăкăр кăмăла кайат-и?

— Вăкăрне пит ырларăмăр та-ха, анђах камăнне пĕлеймерĕмĕр, терĕç ушкăнран.

— Сирĕн ку вăкăр! терĕ Йакур.—Пулăшкомпа йалсовет вăкăрĕ ку. Малашне вăкăр пирки Уртемей пеккисемпе çыхланмастпăр ĕнтĕ. Пирĕн йалсоветђĕпе пулăшкома лайăх ĕçленĕшĕн пађĕç ку вăкăра. Кăçал пирĕн пулăшу комиттеђĕ вунă теçеттин йат тырри пулнă çĕре акса илђĕ. Йалсоветђĕн йалхуçалăх çексийĕ тăрăшнипех пирĕн йалта халђ копператтивра ђлента тăман пĕр ђухăн та çук. Налука, страхховккă укçине те епир çĕр прођђăнĕпех вăхăтђенех татса пĕтертĕмĕр. Çавăнпа вара вулăсра пирĕн ĕçе ырласа çак вăкăра памалла турĕç,—терĕ Йакур.

Пулăшком претçетаттĕлĕн ађине вăкăра илсе кайма хушса, салтса пађĕ. Ађи вăкăр çине çавăрăнса пăха-пăхах çавăтса кайрĕ.

Пухăннă çынсем йал кĕтĕвĕ ăратлă вăкăр туйанни çинђен, ĕнесем çинђен, калаçса саланђĕç.

— Ну, камран, мĕн хыпар илтĕн? терĕ Йакур Лисук патнелле утса.

— Сыв пул ёнтĕ, кайрăм, вĕт? терĕ Лисук. Ун пит çăмартисем хĕпĕртенипе помитор пекех хĕрелсе кайнă.

— Ăçта?

— Рапфака.

— Йепле?

— Епĕ пĕркунах Петĕртен Опкомола сайавлени парса йанăђђĕ, рапфака кĕме комантировккă ыйтса. Петĕр хаљ командирвоккă пани çинђен пĕлтерет. Ех, ĕç тухрĕ. Телей! тесе Лисук хăрах уран сиксе илђĕ. Унтан Йакура сăнаса пăхрĕ.

— Ес хирĕç мар пулĕ, вĕт, Йакур?

— Мĕншĕн хирĕç пулас ман. Епĕ ес вĕренме кайнăшĕн пĕтĕм ђĕререн хĕпĕртетĕп!

— Апла пулсан кўр аллуна! Ыранах кайатăп. Айта киле! терĕ Лисук Йакура аллинђен туртса.

Вĕсем килелле шутарђĕç. Икĕ ђĕре пĕрле хавассăн тапрĕç. Пĕр хаваспа тўпеймийех тулђĕç икĕ ђĕре.

23

Тепĕр кунне Лисук ирех, хĕвелтухăçне хĕрлĕ сăн çапсанах, пасара кайакан кўршĕ çыннипе ларса Шупашкара кайрĕ.

Çул çинҫе, ҫăвашăн кисрентерекен урапи çинҫе ларса пынă ҫухне, Лисук хĕп-хĕрлĕ енĕс улмасем çисе малаллахи пурнăç çинҫен шухăшласа пыҫĕ. Хĕрлĕ, пиçсе çитнĕ тутлă улмасем савăнăçлă вăхăтсене аса илтерҫĕç. Лисука Петĕр çуркунне каланă сăмахсем аса килҫĕ. Петĕр ăна курмассеренех рапфака кайма сĕннĕ. Лисук хăй те Шупашкарта Ҫăваш рапфакĕ умĕнҫен темҫул та иртсе çӳренĕ те, анҫах темĕнрен унта вĕренме кĕме шутлама та хăранă. Хаљ ĕнтĕ çук, Лисук ĕлекхи мар, хăрамасť. Вăл пĕлет рапфакра хăй пек нушта ăшĕнҫе пиçсе тухнă çынсемех вĕреннине.

Шупашкара çитсенех Лисук Петĕр патне кайрĕ. Вара Петĕрпе иккĕш комсомолăн Оплăçри комиттетне кайрĕç...

Тепĕр сехетрен икĕ савăнăçлă çамрăк Опкомран Ҫăваш рапфакне вĕренме кĕме «комантировккă» илсе тухрĕç те, урам урлă ҫупса каçса рапфак çуртне кĕрсе кайрĕç. Рапфакăн аслă çурҫĕ хура çĕрпе станок аҫисене пит кăмăллă йышăнҫĕ.

---

# СЁРЕКЕ ВАҪКИ

Сёреке Ваҫки ҫинҕен мана Макҫӑм пиҕҕе ҫакна каласа кӑтартнӑҕҕӗ.

Макҫӑм пиҕҕе хаљ пит ватӑ ёнтӗ вӑл, анҕах ёлёкхине манман, пит лайӑх астӑваť вӑл хӑй мӗнле нушта курнине

Пӗрре вӑрмана ҫӗр выртмалла лаша ҫитерме кайсан, Макҫӑм пиҕҕепе ҫӗрле лашасем пӑхма кайрӑмӑр. Шырарӑмӑр, шырарӑмӑр лашасене, тупаймарӑмӑр. Макҫӑм пиҕҕе нумай ҫӳренипе ывӑнса ҫитрӗ пулмалла ватӑскер:

— Ҫӑва ҫине, ҫӳреҕҕӗрех-ҫке! Хаљ лаша вӑрисемех ҫук-ҫке — ёлёкхи мар, терӗ. Вут кутнелле кайма кайалла ҫавӑрӑнтӑмӑр.

— Ёлёк вӑрӑсем нумайҕҕӗ-и вара?— терӗм епӗ Макҫӑм пиҕҕене хирӗҫ.

— Пурҕҕӗ... Акӑ хамӑр йалтах пит ҕаплӑ лаша вӑрри Сёреке Ваҫки пулнӑ. Пит пуҫҫӑрскер пулнӑ вара хӑй. Пит вӑрланӑ. Хӑй те вӑрӑ ёҫӗпех вилҕӗ.

Мĕнђул тытса хĕнемен, ватман пулĕ ăна?

Пĕрре епĕунпа пĕрле пĕр уйăх ристанскинђе ларса куртăм. Ăна мĕншĕн лартнине астăваймастăп — çав вăрă ĕçĕпех пулмала... Епĕ хам уретнике хĕненĕшĕн пĕр уйăх лартăм...

— Уретнике мĕншĕн хĕненĕђђĕ вара есĕ? — тесе ыйтрăм епĕ Максăм пиђђене калама ђарса.

— Мĕншĕнни мĕнни, епĕ пĕр çулĕнђе куланай параймарăм: лаша вилсе кайрĕ, пысăк выђăх — пысăк нушта. Лаша туйанкаласа нетоимкă пысăк пулса йулђĕ ман. Çав майпа уретник темиçе хут та пыр сађђĕ. Кантуртисем çурта çырса кайрĕç... Пĕрре, çавăн пек, хайхи уретник (пит пўтсĕр вырăсђĕ вăл, кайаннăй) пыђĕ те:

— Куланайа татрăн-и, суккин сын? тет.

— Татайман-ха, хоспотин утретник: тетĕп.

Арăм сăра ăсса кĕђĕ, сăра парат уретнике (пăртак хĕрĕнкĕрехђĕ хăй). Çапла йăпăлтаткаласа пўртрен кăларса йатăмăр.

— Куланайа хăвăртрах тўлес пулат, лотăр! тесе алăка шалт хупса тухса кайрĕ. Хыçĕнђен тухмарăмăр. Ун пек çынсем хыççăн тухма йăли çукђĕ пирĕн çемйере.

Уретник пӳртрен тухни нумай та пулмарӗ. Хам ҫитӗннӗ хӗр Йеђук шари ҫухӑрса йађӗ карташӗнђе. Лаша тапрӗши мӗн тӗсе ђупса тухрӑм. Уретник ҫинђен шутламан та хам. Пӑхатӑп: хай урнӑ уретник ман Йеђука хӑй айне пӗтӗрсе ђикнӗ те, кӗрмешет... Ђӑтаймарӑм... Тытрӑм та вырӑн ҫинђе выртмаллах ӑшалантарса кӑларса йатӑм. Шашкине (хӗҫне) туртса илсе темиҫе татӑк туса пӗтертӗм. Ҫавӑншӑн пӗр уйӑх лармалла турӗҫ вара...

Вот ҫавӑнта, ристанскинђе, пит калаҫаттӑмӑр вара Сӗрекепе. Калаҫма пит йуратаканскерђђӗ вӑл.

Тӗрӗсси тепле ҫавӑн?.. Хӑш ҫынсем йаппун вӑрҫинђен аманса тавӑрӑнсан, ытла ђухӑннипе аптӑраса вӑрра вӗренсе кайнӑ, теђђӗҫ. Тепле пулнӑ вара?.. анђах хӑй пит пысӑк вӑрӑђђӗ.

— Кайрӑм, тет, ҫавӑн пек, пӗрре Ҫӗрпӳ хули йеннелле «ырлӑх» шырама... Пӗр ҫӗрте вӑрлатӑп — ӑсататӑп, тепӗр ҫӗрте вӑрлатӑп — ӑсататӑп. Ӗҫ ӑнса пырать, тет. Шайккӑ пулнӑ ӗнтӗ вӗсен! — Ҫӗрпӳ пасарӗнђен пӗр лаша ҫине ларса (вӑрласа ӗнтӗ, тесе ӑнлантарать мана Макҫӑм пиђђе) Ишекелле тухса кайрӑм, тет. Ишеке пӗр пилӗк-ултӑ ҫухрӑм

йулнă-и-йулмани, хай йаппун вăрçинђе сусăрăннă ури сурма тытăннă пирки, пĕр куç умне лекнĕ йала кĕрет те выртаť.

Усалах пўрнĕ пулĕ çав, самăй лаша хуçи патнех пыр та лек Ваçка! Çĕрле, Ваçка çывăрсан, хуçи Çĕрпў пасарĕнђен вĕçтерсе çитет килне. Пăхаť: картишĕнђе хăйĕн лаши тăра параť... Кĕркунне, çĕр тĕттĕм пулнă. Килтисем Ваçка мĕнле лашапа килсе кĕнине асăрхаман. Çиђђас старăста, пунетейсем, халăх пухăнаť. Сĕрекене вĕлерес пек хĕнеççĕ те, хăйсен йалĕнђе вилесрен хăраса, кўршĕ йалăн анкарти хыçне кайса пăрахаççĕ.

Выртсан-выртсан тăн кĕре пуçларĕ, тет. Кăшт çĕкленсе пăхатăп пĕр пўрт, инçех те мар, лараť, тет. Аран-ăран сĕтĕрĕнкелесе çав йал хĕрĕнђи пўрте кĕрсе кайрăм, тет. Латнă укçи сăран атă кунђи ăшĕнђе çăлăнса йулнă, атту хупланас пулађђĕ. Кил хуçине:

— Çапла, вăрăхурахсем лашана вăрласа кайрĕç, хама ватса пăрахса хăварђĕç, тесе улталарăм та, вун тенкĕ укçа кăларса тыттартăм, тет. Çынни те аван пулнă ĕнтĕ çав. Çавăнтах сурăх пусса ăшă тирпе ђăркаса вырттарђĕ, тет Ваçкана. Унтан ерехпе пыл вĕретсе пађĕ

тет. Пĕр ерне выртса çӳрекен пулнă вара ун патĕнҫе Сĕреке..

Пăртак самайлансан, — килнĕ-килнĕ Ишеке кĕрсе Микул турра пуççапас тесе шут тытрăм, тет. Ишеке вунă çул та пулĕ кайманни, тен Микул турă та çилленнĕ пулĕ, пĕр йенҫен, тесе кайрăм тет ҫиркĕве. Микул турă умне икĕ пуслăх çурта лартрăм та:

— Ей, Çветтуй Микулай, кунтан малашне лаша çине ларма турă ан хуштăр! Анҫах, тĕплĕ ҫикеймен вак-тĕвек укçасене кăсйасенҫен пуçтарма ан ҫар вара! — тесе пуççапрăм, тет.

— Турра ĕненнийех пулман пулĕ çав, шелҌмăн! — терĕ те Максăм пиҫҫе, вут кутне çитсе тăтăмăр.

Максăм пиҫҫе кукăр ҫĕлĕмне кăларса тивертсе йаҫĕ те, каллех калама пуçларĕ.

— Вилессе те путлĕ вилĕмпе вилеймерĕ вара. Самăй мăнкун çĕрĕ çакăнса вилҫĕ. Мăнкунта Христус ҫĕрĕлсе савăнăç кӳрет, теççĕ. Сĕрекене Христус та хурлăхсăр пуçне нимĕн те кӳреймерĕ, вĕт. Кайарахпа Сĕрекен пĕрмайах çиме çитми пулҫĕ, хăй те текех вăрра çӳреймерĕ, вăйсăрланҫĕ. Наҫарланмасăр, — ĕмĕр тăрăшне мĕн ҫул патак çимен пулĕ! хаҌ те тепле тӳснĕ...

Мăнкун кунĕ тата манăн хуралла каймала пулђĕ ун патне. Сарайăн çӳлти каштинђен витĕрсе илнĕ тилкепине... Виçĕ кун çакăнса тăђĕ; мăйĕ тем вăрăмăш тăсăлса кайнăђђĕ.

Епĕ хуралта ларнă ђухне çавăнта хамăр йал улпуђĕн хĕрĕсем Хусан кађђисемпе курма пыђĕç. Пĕр кађђи: ах, кăна ман ӳкерђĕк туса кайасђĕ, йепле лайăх çакăнса тăрат!.. тесе силлентерсе пăхат Сĕрекене.

Хĕрĕсем: ан силлентер, ой хăратăпр,— теççĕ. Манран Сĕреке çакăннă тилкеперен пĕр татăк касса пама ыйтрĕç. Касса патăм. Çакăннă çын тилкепи (йе урăх йапала) телей парат теççĕ вĕт!.. Пуйана татах телей çитмен... Пĕр хĕрĕ:

— Вăл ĕнер атте патне тем ыйтма пынăђђĕ, атте памарĕ, вара вăрçса тухса кайрĕ. Ой, хăратăп, айта кайатпăр, тесе хĕр урамалла тухса кайрĕ. Ун хыççăн ыттисем те уттарђĕç.

Ђăннипе ĕç çапла пулнă иккен. Сĕрекен мăнкун умĕн çиме ђистийех пĕтсе çитнĕ пулнă мĕн. Вăл кивçен шыраса темиçе çĕре те çитнĕ, паракан тупăнман. Килĕнђе сутмалли йапали те пулман. Йулашкинђен Сĕреке Микулай Микулайђђă улпут патне кайса кĕнĕ, вăл та

паман. Çĕрме пуйан, темиçе ампар тырă ишĕлсе выртнă хăйĕн, пĕр-икĕ пăт пама хĕрхеннĕ! Кăна каласан Максăм пиђђе, çăварĕнђи ђелĕмне кăларђĕ те, çиленсе сурса пăрахрĕ.—Сĕреке никам та паманнипе тарăхса, çынсем ĕçкĕ ĕçнĕ кун выçă ларићђен çакăнса вилеп луђђă, тенĕ пулмалла. Çакăннă вара... Арăмĕ, куçран тайăлнăскер, тата икĕ ађи çын çине тăрса йулђĕç. Пĕр ађи выçăпах вилђĕ пулас, амăшпе ыйткаласа çӳренĕ ђухне. Тепри, ав, Йакур пурнаť, çын пулђĕ. Улми йăвăçĕнђен инçе ӳкмест, тенĕ те ваттисем. Сĕреке Ваçки ывăлĕ Йакуршăн вăл сăмах тĕрĕс пулмарĕ ĕнтĕ. Кăђухне самани те улшăнђĕ, пурнăçĕ те ваттисем каланă пек пыми пулђĕ.

Максăм пиђђе çӳлелле пăхрĕ те:

— Çывăрма вăхăт çитрĕ пуљ, кĕвенте çăлтăр та ђылай çӳле хăпарнă,— терĕ те, аçамне пĕркенсе выртрĕ. Таврара шăпах. Тăрсан-тăрсан анђах çулçăсем çатăлтатса илеççĕ, тата çерçи тăмани вăхăђђĕ-вăхăђĕпе тĕв-вик! тĕв-вик! тутарса сывлăша йанратса кайаť.

# ХУРА ТИНĔС ХУМĔ

Крым. Хура тинĕс хĕрри. Ђул хӳмепе тыттарнă сăрт хĕрринђе, çурта пекех йаштака ӳсекен кипарисемтоппăљсем айĕнђе прахут кĕтсе ларатпăр. Çул çине тухсан кĕтмеллинђен тарăхтаракан йапала çук. Çул çинђи етем кĕттернĕшĕн пит тарăхаť. Тарăха-тарăхах кĕтсе илет кирлине Кĕтме киђем. Киђемлĕхе сирес шутпа сăмах-йумах, йурă-кулă пуçланаť.

Лараттăмăр шăкăлтаса. Пиртен инçех те мар, икĕ хĕрарăм ђарăнђĕç. Пуçĕнђи шурă тутрисене кайалла çыхнă. Пĕри уйрăм хавхалансарах калаçаť. Ун сарлака çамки çинђе пурнăç хăйĕн йĕрĕсене картса хăварнă пулин те, вăл ватă марха. Сăнран та ватă мар та, калаçнă тăрăх шутласан, тата çамрăкрах темелле. Сарлака çанçурăмпа тулли кĕлетке кăна пурнăç курнă çын иккенне кăтартаççĕ.

Хĕрарăм пирĕн йеннелле çавăрăнса прахут пирки ыйтса пĕлђĕ. Прахут пĕр-ик

сехет кайа йулса килессине каласан. вёсем пирёнпе йунашар пырса ларђёç,
Куçсем тинёсе пăхса ытараймаççё. Хура тинёс çине кăвак çитти сарнă пехех туйăнаť. Кăвак çиттине çыран хёр. нелле çитеспе симёс сăн çапса кайнă. Çыран хёрнерех хура сăмсаллă ђарлансем çухрашаççё. Хуллен килекен хумсем çинђе пулăсене сыхласа йарăнса пыраççё. Хумсем çыран хёрнелле çапса кăларсан, кăртик! çухăрса вёçсе кайаççё те, каллех хумсем çине лараççё.

Прахуђё ђас килмест. Сăмах хыççăн сăмах. Калаçса кайрăмăр.

— ...Епё кађђа тухса упăшкапа тăхăр çул пурăнтăм. Тăхăр çултан хамах пăрахса кайрăм.

Виçё ађа манăн. Виççёш те пысăк ёнтё. Асли, хёр, хампа пёрле пурнаť. Вунтăххăра кайрё ёнтё. Курнă та пулё есир ăна. Тсустрахра машшинискăра ёçлет Аван хёр. Сирён пата санатторийе кайкаласах тăраť вăл...

— Есир хаљ ăçта кайма тухнă вара капла, ђăматансемпех? терём епё ун сăмахне пўлсех.

— Упăшка патне кайатăп, Мелиттоппăле, — терё вăл мана, кăшт тута хёррипе кулса.

— Кайалла-и?!

— Çук кивви патне мар, çĕнни пур ман. Çĕнĕрен кађђа тухни нумай пулмасть-ха.

— Мĕнле-ха вăл апла, сирĕн ађусем пысăк-çке? терĕм епĕ тĕлĕнсе.

— Еп винават штолĕ! Аслă хĕрне епĕ вунулттăра ђухнех çуратнă. Мана вунтăваттăра кађђа панинђе епĕ айăплă-и тата? Манăн та пурнас килет, вет, çут тĕнђере!..

— Кађђа каймасăрах та упăшка сахал мар пулĕ вăл, кирлĕ пулсан?

— Çын тумтирĕн ăшши çук, çын упăшкин шанђăк çук тенине илтмен-и есир! терĕ вăл ман çинелле пăхса.

Арăм сăмаххине хирĕç ним калама аптăраса ђĕнмесĕр лартăм епĕ пер мехел.

— Çапла çав... терĕ вăл, — çавăнпа нимĕн те тĕлĕнмелли çук унта. Пурнăç вăл, темне те курмалла пулать пурнăçра. Пурнăç вăл Хура тинĕс хумĕпе пĕрех. Таçталла та илсе кайма пултарать. Пурнăç тĕвви пит çыхланђăк. Пурнăç çулĕн кукăрсем нумай. Ак çак йĕрпе тӳптӳрех тесе калаймăн. Пурнăçĕ те санран мĕн кăмăла кайнине ыйтсах тăмасть... Анђах епĕ хаљхи пурнăçа ĕлĕкхинђен темиçе хут ытла йурататăп.

...Пит ҫухӑн ҫын хӗрӗ пулнӑ епӗ. Атте манӑн крек, анне вырӑс. Атте атӑ тавраш ҫӗлеҫҫӗ. Ҫӗлессинҫен ытла кив-вине йусакаласа пурнаҫҫӗ. Ёҫлесе туп-нине атте ёҫсе пӗтерсех пыраҫҫӗ. Ҫемйи пысӑк пулнӑ. Ҫиҫӗ аҫа, ҫитменнине ҫиҫҫӗшӗ те хӗр. Елӗкхи саманара хӗр, вӗт, вӑл мӑй ҫинҫи кире пуканӗпе пӗрех пулнӑ.

Ниҫта ёҫлеме пама май пулман. Кунта пирӗн хапрӑк-савӑтсем те ҫук. Вӗрентме ҫухӑн ҫын пултарайман... Каҫҫа та епӗ ҫухӑн пурнӑҫ пиркийех ҫамрӑкла кайнӑ. Епӗ вунпиллӗке ҫитсен, мана пӗр пуйан крек курнӑ та, килӗштерсе кайнӑ. Ҫам-рӑк, вӗресе тӑракан йунлӑ, хитре хӗр кама кӑмӑла каймӗ!...

Хайхи ҫав крек пӗрре аттене хӑй патне ҫӗнет те, ёҫтерсе ӳсӗртет. Илӗрт-мелӗх укҫа парать. Ун вырӑнне аттерен мана хӑйне каҫҫа пама сӑмах илет. Пӗлетӗр ӗнтӗ ӗлӗкхи саманара мӗнле пулнине. Укҫа пулсан пурне те тунӑ. Укҫа саккун пулнӑ. Ваттисем калашле — «йуратнипе йуратманнине ыйтмаҫҫӗ, ук-ҫа параҫҫӗ те, ҫыхаҫҫӗ те пӑрахаҫҫӗ».

Хам туйа хам та кураймарӑм. Пӗрмай макӑртӑм. Туйӗ те мансӑрах иртрӗ. Атте мана:

— Пурӑнсан-пурӑнсан хӑнӑхатӑн тетҗӗ.

Тӑван аттене курассӑм килми пулҗӗ. Пуйан крек маншӑн аттене пиллӗк ҫӗр тенкӗ паҗӗ. Вара хӗрӗх ҫултан иртне, шуралма пуҫланӑ старик мана вунпилӗк ҫулхи аҗана хӑй хӗрӗ пек лартрӗ те кайрӗ Ҫевастоппӑља. Ҫапла ирӗксӗрех арӑм турӗҫ. Пуйанскерҗҗӗ ман упӑшка тени. Ҫевӑстоппӑљра виҫӗ макаҫӑн тытаҗҗӗ. Пӳрҗӗ калама ҫук җапла҆җҗӗ. Ниҫта тухмасӑр тӑхӑр ҫул пурӑнтӑм ҫавӑнта. Хӑй тем пек лайӑх тумлантараҗҗӗ, мӗн ыйтнӑ пурне те илсе параҗҗӗ. Урама тухас тесен те кӑлармастӑҗӗ. Тарҫисене мана астума каласа хӑвараҗҗӗ. Пӗр алӑкӗ пӗр мехел питӗрӗнмесӗр тӑман. Тӑвансем пырсан, вӗсене те кӳрместҗӗҫ, пӗр-пӗр трактире илсе кайса ӗҫтерсе ӳсӗртейреҗҗӗҫ. Тӑхӑр ҫулниҫта тухмасӑр, никама курмасӑр пурӑнтӑм. Ҫевастоппӑљра тӑхӑр ҫул пурӑнса хулапа паллашман. Кунта ҫитсе пойӑс, правус курман! Калама намӑс!

Вӑл т ӗ р м е р е н тухса тарсан, ҫӗнӗрен ҫуралнӑ пекех туйӑнҗӗ хама.

...Вунҫиҗҗӗмӗш ҫулта ҫӑлӑнтӑм.

Хӗрарӑма ирӗк тенине илтсенех тухса тартӑм. Пӗр ерне тутар йалӗнҗе

пурӑнтӑм. Кайран кунта килтӗм. Санатторине ӗҫлеме кӗтӗм. Кайран тем ҫул тилмӗрҫӗ, кайалла ҫӗнҫӗ. Каймарӑм.

— Мӗн ҫав саниттарккӑра асапланса пурнатӑн? Йепле ҫав ҫирлӗ ҫынсем хыҫҫӑн тасатса пурнас килет санӑн? Таврӑн ман пата, пурӑн хуҫа пек, теҫҫӗ.

— Кирлӗ мар мана сан пуйанлӑху, канӑҫлӑ пурнӑҫу, пурнӑҫ мар вӑл—тӗрме, терӗм. Ҫынсен хыҫҫӑн тасатам, ҫапах санпа пурӑнассӑм ҫук, хам пӗҫҫен, хама хам хуҫа, хамра ирӗк! тесе йатӑм.

Асли, хӗраҫа, кунта пурнаканни, ман хыҫран пӗр ҫултанах тарса килҫӗ. Икӗ ывӑлӗ унтах пурнаҫҫӗ. Вӗсем ашшӗне туртнӑ. Мана йуратмаҫҫӗ. Анне тесе ҫӗнмеҫҫӗ, „мушиҫкӑ" тесе йӗкӗлтеҫҫӗ. Кӑҫал аслӑ хӗрне хӑнана ҫӗннӗ. Вӗсем халҫ те пуйан пурнаҫҫӗ, сут тӑваҫҫӗ. Ҫитнӗ кунах тапратса йаҫӗҫ тет: пӑрах ҫав мушиҫкӑпа пурӑнма тесе калаҫҫӗ, тет. Хӑйсем патне ҫӗнеҫҫӗ, тет. Йут патшалӑха университтета вӗренме кайатпӑр тесе илӗртеҫҫӗ, тет. (Вӗсем пурте иккӗмӗш сыпӑк шкулта вӗренсе тухнӑ) Хӗр ман комсомолта тӑрат, ӑна унтан тухма хушаҫҫӗ, тет. Ку килӗшмен: йут патшалӑха кайма та, комсомолтан тухма та. Вара апат хушшинҫех тем те пӗр

каласа вӑрҫма тапратрӗҫ, тет. „Ес комсомолсемпе карта хӗрринҫе выртса ҫӳренӗскер, аннепе пурӑнса инкеленсе кайнӑ“ тата тем те пӗр ырӑ мар сӑмахсем каласа тӑкрӗҫ, тет. Вара хӗр апат ҫинӗ хушӑранах тӑнӑ та пиҫӗсем ҫине сурса тухса килнӗ. Вот есӗ пыр та калаҫ! Хурҫка ҫӗпписене пӑхса ӳстернӗ ҫӑхӑ пекех пултӑм ҫав!

Унӑн ҫамка ӳҫӗ пӗрӗнсе илҫӗ, куҫӗсем пӗлӗтлесе килҫӗҫ. Анҫах вӑл нумайах пымарӗ. Унтан каллех, ҫамрӑк хӗр пек, кӑкрисене ҫӗклентерсе сывласа илҫӗ те, вӑрман варринҫе йухса выртакан ҫӑл шывӗ сасси пек, кулла шӑрантарҫӗ.

Унашкал, ҫуллӑ пулин те, ҫамрӑк ҫунлӑ хӗрарӑмран епир пит тӗлӗнтӗмӗр, тӗлӗннине хӑйӗнҫен те пытармарӑмӑр. Епир тӗлӗннине кура вӑл тата хавасләрах пулма, тата ҫамрӑкрах курӑнма тӑрӑшрӗ.

— Хаљ ҫӗнӗрен каҫҫа тухрӑм ак! терӗ вӑл татӑлнӑ сӑмаха сыпса.

— Кама тухрӑр-ха, мӗнле ҫынна?

— Есир пӗлместӗр ӑна. Вӑл сиртен икӗ уйӑх малтан выртса кайрӗ. Мелитопољрен. Комунис, парттире 1913-мӗш ҫултанпа тӑраӗ. Хӗрӗх ҫулта.

— Есир хăвăр миçере? Тесе ыйтрĕ ман йулташ.

— Епĕ вăтăр п и л л ĕ к е кайрăм ĕнтĕ. Вăл м а л т а н пĕлтĕр çула килнĕђђĕ,— терĕ хĕрарăм упăшки çине куçса. Ун ђух епĕ санатторире ĕçлеттĕм. Кунне темиçе хут та, темле майпа та калаçмалла пулаť выртакансемпе — саниттарккăн ĕçĕ çавнашкал. Паллашса кайрăмăр. Кунтан кайсан çырусем çӳреткелерĕмĕр. Кăçал тепĕр хут килђĕ. Вăл килнĕ ђухне епĕ санатторире çук. Ађапа амăш çурђĕн пуçлăхĕнђе ĕçлетĕп. Вытвишенкă епĕ. Кĕркунне лартрĕç мана вăл ĕçе. Местком тата санатторире ĕçлекенсем сĕннипе лартрĕç. Çĕнĕ ĕçре те епĕ ђасах хăнăхрăм. Çынни те епĕ пĕђĕк ађасене пăхма та, йуратма та пит маçтăр. Ейамак, хам сăмахран пăрăнса кайрăм-ха,— терĕ вăл тутăрне тӳрлетсе. — Вăт вара вăл санатторире мана тупмасăр, ађапа амăш çуртне пыђĕ... Хăна турăм. Калаçкаларăмăр. Вара пĕрлешсе те кайрăмăр. Хаљ ђĕнсе йађĕ те кайатăп ĕнтĕ.

— Йуратсах кайрăн-и?

— Йуратмасан каймастăп та... Халиђђен йуратса курман. Пирвайхи йурату ку ман. Те çавăнпа хама хам çамрăкланнă пек туйăнаť.

— Ей, ан çывăрăр, пилетсем пама пуç-ларěç! тесе çухăрђě пěри. Пирěнпе калаçакан хěрарăм пилет илме кайрě. Епир пуç тăрринђе топпăљ çулçисем кěвěллěн шепěлтетнине итлесе ларса йултăмăр!

Хура тинěс лăпкăђђě те тасађђě. Инçетре тељфинсем тытакан пěр парус-лă карап кăна пěр вырăнта тымар йарса тăнă пек курăнађђě.

Ђасах хěвел виђкěн тăраллă, çара сăртсем хыçне пытанђě. Пěлěтсем тимěр-кăвак кушаксем пекех çав сăрт тăррисем тăрăх ђупма тытăнђěç. Çил труках хěвел-тухăç йеннелле çавăрăнса хытăрах вěрме тытăнђě. Хěвел тухăçěнђен вěрекен çил кунта ђас-ђасах пит хăвăрт вăйланса кайаť. Вара тинěс çинђе тăвăл пуçланаť. Çавăнпа епир çил вăйланма пуçласанах тинěс çинелле хăракаласа пăхма тапрат-рăмăр. Тин анђах лăпкă кăвак тинěс хăвăрттăн хуралса пырса, хушка пуçлă хумсене ђуптарма пуçларě. Хура тинěс уйар, лăпкă çанталăкра нихçан та хура, ăна килěштермесěр, кăвак тумлă çи-йěпе пěлěтпе танашма пăхаканскер, тă-вăл вăйланнăçем хуралса хăрушланса пыраť... Пирěн пек прахут кěтекенсен,

халиђђен тинĕс силленине курманнисен сехрине хăпартаť.

Сисмен хутранах прахут çухăртса йађĕ. Унтан нумай та иртмерĕ вăхăт, тем пысăкĕш тинĕс прахуђĕ хумсем çинђе йăвăррăн йарăнса кавăнђа[1]) кĕрсе тăђĕ.

— «Крым» ку. Çĕнĕ прахут. Куна Керманире Кампурк хулинђе тутарнă, терĕ ман йулташ Украйнă çынни, шахťор.

— Кун пек пысăк тата хăвăрт çӳрекен прахут пĕтĕм Хура тинĕс флотĕнђе те иккĕ анђах. Тепри — „Круçийа“, вăл та çĕнĕ. Отессăран Паттума та икĕ талăк çеç кайаť, тесе çырнăђђĕ ку прахут çинђен хаçатра, — терĕ тепри.

Ĕçлекенсенпе хресђенсен патшалăхĕ саккасĕ тăрăх нимĕç ĕçлекенĕсем тунă прахут çине ларма хатĕрленсе, мол[2]) çине васкасах кайса тăтăмăр.

Тăвăлă тинĕс хайаррăн шавларĕ. Шавĕ ӳсрĕ. Тискерĕн сикрĕç Хура тинĕс хумĕсем. Прахут тăвăла çиленсе пысăк сасăпа уласа йађĕ. Прахут сасси тинĕс шавĕ çине туланса ђупрĕ.

---

[1]) Прахутсĕм тăракан вырăн.

[2]) Мол—тăвал тухсан, тинĕс хумĕсем прахутсем тăракан вырана кĕресрев ђарма тунă ђӳл хума.

## ÇУРХИ

Хёвел хăйĕн мĕлйунлă йĕпписемпе йĕплет çĕре. Куçа курăнмаççĕ унăн йĕпписем, çапах та хăйсен ĕçне пит хăвăрт тăваççĕ. Хаљ анђах шурă тумлă çĕр ик-виçĕ кун хушшинђех хура сăмсахсене кăтартрĕ. Тепĕр ернерен уйри йуртан, хĕлле çуна çулĕ пулнă вырăнсенђе, хура çĕр çине пир тăрăхĕсем шуратма сарнă пек, татăк-тăтак шурă ленттăсем çеç тăрса йулђĕç.

Епĕ Аптул патне такçанах кайма пулнăђђĕ. Анђах, тем-амакла, пайан пĕр ĕç тупăнаť, ыран тепри,—таçтан амакран тухаť çав ĕç,—такки кайса пулмарĕ каланă вăхăтра. Çукунненех йулса кайрăм.

— Есĕ пырастăк Кĕтне çинђи кĕпере илиђђен пыр. Хăвăртрах. Пăр кайсан кунта йĕри-таврах шыв, ниçта тухса çӳремелле мар пулаť. Куратна, уйра йур пĕтнĕпе пĕрех вĕт, ĕнтĕ. Çак кунсенђе пăр та кайĕ, васкас пулаť,—тесе хăварђĕ Аптул пĕринђе.

Аптул апла каласан тепĕр куннех, пĕђĕк çуна кӳлсе, Аптул йалне, ирхи шăнпа, пĕђђенех тухса вĕçтертĕм.

Тутар йалĕ. Пысăках та мар хăй—икĕ миђĕт. Икĕ мулла йамăт çăкăра харам пыра йарса пурăнаççĕ. Шкулĕ пĕрре çеç, вăл та нађар. Икĕ тем пысăкĕш миђĕтсем çумĕнђе шкул, ватă йумансем хушшинђи вĕтеленнĕ шĕшкĕ пекех, пит мĕскĕн ларать. Çапах ĕçлет. Çапах пĕђĕккĕн, пĕрђĕн çутă кӳртет тутар йалне.

Йалта партти йађейкки пур. Иађекă çекреттарне шыраса кайатăп. Пĕр хирĕç пулнă, пуçне шурă ђалма авăрласа йанă ватă тутартан—Аптул ăçта пурнать кунта?—тесе ыйтатăп.

Ђалмаллă старик ман çине ђалăшшăн пăхса илђĕ те:

— Авă çавăнта,—терĕ пĕр çĕр çумне, тирĕс кӳпи пек, çыпçăнса ларнă пӳрт çине тĕллесе кăтартса. Нихçан хупăнса курман ђăвашла хапха витĕр картиш тенине кĕрсе, старик кăтартнă пӳрте кĕрсе кайрăм.

— Ей, алла писмиљђахим!... тесе, сарлака сак çинђе урисене хăй айне хутлатса ларнă, йӳтенĕ карђăк хăйĕн Макомет пророкне тархасласа ларнă вăхăтра епĕ алăкран пырса кĕтĕм. Епĕ кĕрсенех карђăк кĕлтума пăрахрĕ. Палламан йут

нçы сасартăк пырса кĕнипе шикленнĕ пек пулђĕ-и тен, пĕр сăмах ђĕнмесĕр пăхса ларатť.

— Мĕн çинђен пит хытă кĕлтурăн ха, епи?—тесе сăмах хушрăм. Хам çинђен мĕнма килнине кăшт пĕлтертĕм карђăка. Ман карђăк самайах хĕрӳленсе калаçа пуçларĕ (ахăр ăшђикки тулса çитнĕ тĕле пулнă пулĕ!)

— Ей аçам! Мĕн калас ĕнтĕ сана. Пĕр ывăлăм пур ман. Мĕнçул вĕрентрĕм, мĕнђул тăрăшрăм туpă саккунне вĕрентме... Вĕрентĕр Аптул,—муллана тухĕ, ырă çын пулĕ,—пурнăç тăвăпăр тесе шухăшласа пурăнтăм. Хам çийес татăка çынна парса тенĕ пек, вĕрентме тăрăшрăм ăна. Мулла пулаймарĕ, шуйттан çынни пулђĕ. Кумун пулђĕ. Шуйттан ађана тĕрĕс çул çинђен пăрса кайрĕ... Çавăнпа ђĕре ырататť...

Пĕђĕк алăк, ашăкланăскер, уçăлса кайрĕ те пӳрте карђăкăн пĕртен пĕр ывăлĕ, йалти партти йађейккин çекреттарĕ, Апу л йулташ килсе кĕђĕ.

— А-а, есĕ килнĕ-и! лайăх-и аван-и тесе Аптул пишметне хывса хуђĕ, унтан сĕтел хушшине ларса „Кăсăл Татарстан“ хаçата пăхкалама тытăнђĕ. Епир амăшп калаçатпăр.

— Мĕн калаçатăн çак есĕ унпала. Çăтăлнă çăпатаран çĕнĕ çăпата туас çук ĕнтĕ. Ейте лар ак кунтарах, ҁей ĕçетпĕр, перенкĕ çийетпĕр. Ытти пур тесе мутанма пултараймастăп та, перенкĕ пур çитет. Ей, перенкĕ пĕшерикĕс елĕ!—терĕ вăл кăмака умĕнҁе тăрмăшакан арăмне.

Тепĕр çур сехетрен кĕрпеклĕ вĕри паранкăсене йавăнтарса пурнăç çинҁен калаçма пуçларăмăр.

— Есĕ пĕлетĕн-и-ха, пирĕн тутарăн ыран пит пысăк праçник ĕнтĕ—Пайрам. Çавунпа вон тасатаç, хатĕрленеç вĕт-ха арăмсем. Мĕн туас тетĕн усенпе! тесе кулаť Аптул.

Каç пулса килҁĕ. Аптул арăмĕ шывланса ларакан, пĕр хут ҁўреҁесене тухса хупрĕ.

—Ĕнте, урама тухар, есĕ курман пулĕха?—терĕ Аптул.—Кĕçĕр икĕ миҁĕт тăринҁе те çамрăксем çĕрĕпе анмасăр турă кĕллисене йурлаççĕ ĕнтĕ. Ваттисем çĕркаçах шалта, миҁĕтре ирхинеҁҁенех тула тухмасăр кĕлтăваççĕ. Тула тухма йурамасť, тухас килсен те çавăнтах...

Тула тухма аллах хушман... ха, ха, ха!—ахăлтатсах кулаť Аптул йулташ.

Урама тухрăмăр. Икĕ миҁĕтĕн те тăррисем çап-çутă. Иккĕшĕн тăрринҁе те

тутар çамрăкĕсем, пĕр-пĕринђен ăмăрт малла хăтланнă пек, мĕн вăй çитнĕ таран кăçкăрса йурлаççĕ. Пĕтĕм йал вĕсен сассипе тулса йанăрать.

— Вот пыр та калаç есĕ вĕсемпе. Миçе çул ĕçлетĕн турра хирĕç, çапах та йалта турра ĕненменни вунă çынтан ытла мар. Мулласем вăйлă ĕçеççĕ... Пирĕн тутарăн релики сĕрĕмĕ амăш сĕђĕпе пĕрлех кĕрет çын ђĕрине мур...

Аптул Тонпасри шахтăра крусђĕк пулса ĕçленĕ. Унтан ђирлесе йала килсе лекнĕ. Мĕн килнĕренпех Аптул йалти кулакемпе кĕрешсе пурăнать. Мулласем темиçе тĕрлĕ майсемпе тăрăшса сапакан тĕн сĕрĕмне сиресшĕн кĕрешет. Коопператтиври, йалсоветĕнђе претçетаттĕл пулса ĕçлет.

Аптул йалĕнђе хаљ пĕр ђухăн та коопператтивра тăманни çук. Пурте коопператтив ђленĕ.

Аптул ликвитаттăр. Вăл çирĕм виçĕ çынна хута вĕрентет. Аптулсăр йалта пĕр опђĕствăллă ĕç те иртмест. Унăн пур çĕре те ĕлкĕрмелле, пурне те тумалла. Мĕншĕн тесен вăл комунис.

— Ку самооплошенипе, çураки камп пани йĕпе ађасене темиçе кун вĕрентей

мерĕм ĕнтĕ, тесе тарăхать вăл. Аптул çĕнĕ ĕçе, ĕçхалăх пурнăçĕн никĕсне çĕнĕрен хывас ĕçе, пĕтĕм ҫĕререн тытăннă. Çырварса кайиҫҫен шухăшпа аптăраса çитмĕл çиҫĕ хут та çавăрнать пулĕ...

Миçе çул шутлать ĕнтĕ йалти пурнăç çинҫен. Ҫухăн пурнăçпа ниçта кайма, ним тума çук.

Акроном кашни çулах — клевĕр акмалла, çĕртмене ир тумалла, нумай пусăллă уйа куçмалла, ăратлă сысна туйанмалла... тесе вĕрентет.

— Çĕртмене ир туни аван-ха вăл та мĕнпе тăвас-ха ăна? Лаша выранне хăвăн кӳлĕнмелле мар çав. Пурпĕрех пуйана тилмĕрмелле, пуйан хăйĕнне пĕтермесĕр санне тытăнмасть, тесе шухăшлать Аптул.

Ҫухăна çĕртме ир туни çеç, нумай пусăллă уйа куçни çеç, таса вăрлăхпа акни çеç нушталăхран тухма пулăшма пултарать-и?

— Çук, пултараймасть, тет Аптул.

Çавăнпа ҫухăнсем хушшинҫе нумай пусăллă уйшăн мар, çĕртме ир тăвассишĕн мар, ăратлă выҫăх усрассишĕн мар, ҫи малтан, пĕрлешсе ĕçлессишĕн, иерттеллĕхшĕн, ушкăнлăхшăн акиттатсилемеллине Аптул никам вĕрентмесĕрех пит лайăх ăнланса илет.

Парттин 15-мĕш сиесĕн решенийĕсемпе паллашсан, Аптул хăйĕн шухăшне пурнăçа кӳртмешкĕн пит çине ăрса тытăнаť.

— Ђи малтан коллектив, ушкăнлă хуçалăх,—унтан ытти: нумай пусăллă уй, ирхи çĕртме, клевĕр, ăратлă выљăх... пурте хăйсемех пулаççĕ,—тесе шухăшлаť Аптул.

Пит тарăн илет вара шухăша Аптул. Шахтă Аптула шухăша пат тарăнтан илсе шухăшлама вĕрентнĕ. Вăл ăна ĕçе те тĕплĕ тума вĕрентнĕ. Çĕр кăмрăк ĕçĕ Аптулран çирĕп, тĕреклĕ пољшевик пĕçерсе кăларнă.

Мĕнрен тытăнмалла? Мулла сĕрĕмне малтанах пăђлантармасан, ђухăнсене пĕрлештерме пит хĕн пулассине Аптул пит аван пĕлсе тăраť.

Малтан мулласăр, макометсăр пурăнма пултаракан çынсем хатĕрлемелле—малтан ђемĕнт кирлĕ, вара петтон çуртне—ушкăнлă хуçалăхне тума пуçлама йураť. Пĕтĕм вăйран, пĕтĕм ђĕререн тăрăшса ĕçлет Аптул. Вĕрет ĕçре шахтӯрăн вĕри йунĕ.

Хăйĕн нађар куçĕсене хĕрхенмесĕр, тĕп суккăр пулса ларасан хăрамасăр, тутарла кĕнеке-хаçатсем вуласа параť, ăнлантараť йурлăсене.

—... Тăвастăк теплĕ пултăр, ерттел çеç мар, комунă тăвас! тет Аптул. Ĕç хĕрсе пырать. Пĕрерĕн-пĕрерĕнех вунă çын пуçтарăнать.

Пуху. Шкулта иртен пуçласа каçђен тĕплĕ, тарăнтан илсе шухăшласа, пурне те виçе пăхнă хыçăн „Кăсăл йăлтăс" йалтă комунă çурăлать.

„Касăл йăлтăс" — ђăвашла „Хĕрлĕ çăлтăр"—Комунăна вунпĕр килĕ, пурĕ 43 йе так" пĕрлешеççĕ.

Аптулăн темиçе çул пуçа ыраттарса. çÿренĕ шухăшĕ пурăнçа кĕђĕ. Аптул хĕпĕртенĕ. Аптул кулать, çав вăхăтрах куç хашакисем пĕрĕнсе килеççĕ те, Аптул каллех шухăша кайать. Шухăш пысăк—питĕ пысăк, ĕç пуçласа йамалла...

Шкултан тухрăмăр. Аптул йулташ хăй патне ђей ĕçме ђĕнет. Кайатпăр. Çул çинђе Аптул мана:

— Пит пысăк ĕç пуçларăмар, мĕн пулсан та вĕçнех çитересђĕ... Çитеретпĕр! —терĕ.

Пољшевик каланă сăмах пурнăçа кĕменнине кам та пулсан курнă-и ку таранђђен?

Шахтăра çуралса, ун витĕр пиçсе тухнă пољшевик сăмахĕ те ђул пекех çирĕп пуласса шанса утрăм епĕ малалла.

---

ТУПМАЛЛИ:

*Стр.*

Иссайёв Мĕтри . . . . . . . . . . 5

Лисук ђăптаçă . . . . . . . . . . . . . . 11

Сĕреке Ваçки . . . . . . . . . . . . . 85

Хура тинĕс хумĕ . . . . . . . . . . . 92

Çурхи . . . . . . . . . . . . . . . 102

# СССР-ти Халăхсем Тĕп Истаттĕлстви

## Илемлĕ литтературă:

1. Н. Шупуççынни. Йеркĕн 1 т. 25 п.
2. Викторов. Йалти кĕвĕсем. 30 п.
3. Курак. Сăвăсем . . . . . 35 п.
4. Шаланкă. Ирхи сывлăм . 35 п.
5. Золотов. Çамрăк паттăрсем. 35 п.
6. Дорохов. Çĕнĕ пурнăç . . 12 п.
7. Орьев. Комсомолĕссем . . 35 п.
8. Краснов. Шуррисемпе çапăçни . . . . . . . . . . 45 п.
9. Данилов. Тайкара . . . . 12 п.
10. Викторов. Çырмара . . . 40 п.
11. Йунлă самана . . . . . . . 35 п.
12. Данилов. Калавсем . . . . 35 п.
13. Хусанкай. Хури. Çирĕм улттă . . . . . . . . . . 15 п.
14. Талвир. Хĕллехи сивĕре . 25 п.

15. Пирĕн çул (МАПП ђăваш çексин аљманахĕ) . . . . . 75 п.

16. Владимирский. Савăт ађи Микул . . . . . . . . . . 15 п.

17. Касаткин. Çунат Петĕр . 12 п.

18. Перовская. Мишкă . . . 25 п.

19. Олейников. Влаç пирĕн алăра . . . . . . . . . . . 20 п.

20. Неверов. Пĕђĕк ађасем ваљљи çырнă калавсем . . 40 п.

21. Полонская. Ђасси . . . 12 п.

22. Бианки. Кайăк çурђĕсем . 15 п.

---

**Кĕнекесене илме укçа çак атрĕссемпе йарăр:**

1. МОСКВА, Центр, Никольская 10. Торготдел Центриздата.

2. САМАРА, Советская, 76. Сред. Волжское отд. Центриздата.

Хакĕ 45 пус — Цена 45 коп.

х.

На чувашском языке

М. ИСАЕВ. — Новое поколение.

ЦЕНТРИЗДАТ НАРОДОВ СССР
Москва, центр, Никольская, 10